81(4Чув)-9
Ю 96

В. Е. ЕФИМОВ, С. П. ЮШКОВ, А. М. СИДОРОВА.

9.чув.

# ПĔРРЕМĔШ КЛАСРА ĂВАН СĂМАХ“ КĔНЕКЕПЕ ĔÇЛЕМЕЛЛИ ЕТОДИКА КĂТАРТĂВĔСЕМ

ЧĂВАШИЗДАТ — 1970

Национальная библиотека ЧР
4-014769
14769 чув

3 к
81(ЧЧВ)-9
К 7090

С. П. ЮШКОВ, В. Е. ЕФИМОВ, А. М. СИДОРОВА

# ПĔРРЕМĔШ КЛАСРА „ТĂВАН САМАХ" КĔНЕКЕПЕ ĔҪЛЕМЕЛЛИ МЕТОДИКА КĂТАРТĂВĔСЕМ

ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1970

ПРОВЕРЕНО
20 16 08 ИЮН 2017

14769 гув.

им. М. Горького

# УМСĂМАХ

Ку методика кăтартăвĕсене çĕнĕ программа тăрăх хатĕрленĕ. Унăн тĕллевĕ — пуçламăш шкулта 1-мĕш класра ĕçлекен учительсене чăваш чĕлхи тата вулав урокĕсене планлама тата вĕсене ирттерме пулăшасси.

«Тăван сăмах» учебник — 1-мĕш класра вĕренекенсен вуламалли тата чăваш чĕлхине вĕренмелли пĕрремĕш кĕнеке. Пĕрремĕш урокра вĕренекенсене çав кĕнекепе тĕплĕн паллаштармалла. Унтан чăваш чĕлхипе вĕренмелли темăсене, вуламалли статьясене тупма хăнăхтармалла. Кĕнекери кирлĕ страницăна тупма лента е илемлетнĕ хут татăкĕ хурса паллă тума вĕрентмелле.

1-мĕш класра вĕренмелли çĕнĕ учебник «Тăван сăмах» икĕ пайран тăрать: пĕрремĕш пайĕ — «Чăваш чĕлхине вĕренгесси», иккĕмĕш пайĕ — вулав урокĕсене ирттерме панă калавсемпе статьясем. Вулав тата чăваш чĕлхине вĕрентме эрнери сехетсен шутне пĕр пек уйăрса памалла.

«Тăван сăмах» кĕнекере чăваш чĕлхипе вĕренмелли тата вуламалли материала темăсем тăрăх пухса панă. Кашни темăна вĕренсе пĕтернĕ тĕле вĕренекенсен уйрăм пĕлӳ илмелле, унпа усă курма пĕлмелле. Вĕренекенсем илмелли пĕлӳ çинчен уйрăм темăпа мĕнле ĕçлемеллине аяларах кăтартса панă.

Методика кăтартăвĕсем, темăсенчи материала сехетсем çине уйăрса пани тĕслĕх çеç пулса тăрать. Кашни учитель, хăйĕн опытне, класс уйрăмлăхне шута илсе, ĕçе урăхла планлама та, ĕçре урăх майсемпе усă курма та пултарать.

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ УРОКĔСЕНЕ ИРТТЕРЕССИ.

«Чăваш чĕлхине вĕренесси» пайра вĕренекенсен ĕçĕсене çапла йĕркеленĕ:

1. Çырса илмелли хăнăхтарусем;
2. Мĕн те пулин хушса е палăртса çырса илмелли хăнăхтарусем;
3. Хăйсем тĕллĕн тума панă ансатрах ĕçсем;
4. Кăткăсрах творчествăллă ĕçсем;
5. Картинăсем тăрăх калаçу чĕлхине аталантармалли ĕçсем.

1-мĕш класра изложенисемпе сочиненисем пысăк пулмаççĕ, вĕсем урокăн пĕр пайне çеç йышăнаççĕ. Çавăнпа та чăваш чĕлхипе вĕренмелли материала сехетсем çине уйăрса панă чухне çыхăнуллă калаçу тата çыру чĕлхине аталантарма уйрăм сехетсем уйăрса паман.

### 1 §. ПРЕДЛОЖЕНИ, СĂМАХ, САСĂ, САСПАЛЛИ ТЕМĂНА ВĔРЕНТЕССИ *(3 сехет)*.

Букварь хыççăн чăваш чĕлхине вĕрентме предложенирен тытăнмалла. Предложени çинчен пĕлни ачасене тĕрĕс вулама, çырура кирлĕ чарăну палли лартма вĕрентет.

Паллах, пĕрремĕш класра вĕренекенсене предложени çинчен ансат пĕлӳ кăна памалла. Вăл ачасен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă.

Пĕрремĕш хăнăхтарăва вуланă чух тăватă çĕрте чарăнса тăрса вуламалла. Мĕншĕн чарăнса тăрса вуланине учителĕн ачасене ăнлантарса памалла.

Учитель пулăшнипе ачасем пĕтĕмлетме пултараççĕ. Точка таран вуланă кашни сыпăк уйрăм предложени пулнипе паллашаççĕ.

Малалла вӗсене хӑйсем тӗллӗн ӗҫлеме хӑнӑхтарусем пана. Малтанхи икӗ хӑнӑхтарӑвӗнче кашни предложени уҫҫан курӑнать, кашнин хыҫҫӑн точка лартнӑ, кашни ҫӗнӗ предложение пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырнӑ. Ачасем предложение уйӑрса илме вӗренеҫҫӗ.

Кун хыҫҫӑн вӗсене кӑткӑсрах ӗҫ пана. «Канмалли кун» текста вуласа тухмалла та кашни предложение хӑйсен уйӑрса илмелле.

Паллах, уйӑрса илес ҫӗрте предложенин шалти элеменчӗсемпе паллаштармалла, ӑна валли ҫакӑн пек ыйтусем лартмалла.

1. Предложени вӗҫӗнче сасӑ мӗнле пулать?

2. «Пулнӑ» сӑмах хыҫҫӑн чарӑнса тӑмасӑрах «Коля» сӑмаха вуласа кайсан, мӗн ҫырнине ӑнланмалла-и?

Ҫак ыйтусем хыҫҫӑн ачасем хӑйсемех тавҫӑрса илеҫҫӗ. Кашни предложени вӗҫӗнче сасӑ анать те татӑлать. Тепӗр предложение вулама тытӑниччен чарӑнса тӑратпӑр. Предложение йӗркелес ҫӗрте сасӑ пысӑк вырӑн йышӑнать. Кунсӑр пуҫне учителӗн кашни предложени уйрӑм ӗҫе кӑтартса панине те ӑнлантармалла. Канмалли кун пулнӑ — кунта пӗр ӗҫ пулса иртни ҫинчен каланӑ. Коля ирех тӑнӑ — тепӗр ӗҫ, тепӗр шухӑш ҫине куҫать. Ҫак майпа класра ку хӑнӑхтарӑва пӑхса тухмалла. Текстра пилӗк предложени. Учителӗн кашни предложение кирлӗ сасӑпа вулама кирли тата кашнин хыҫҫӑн чаранса тӑмалли ҫинчен каласа ӑнлантармалла.

Предложени сасӑ тӗлӗшӗнчен мӗнле йӗркеленнине 4-мӗш хӑнӑхтарӑва тунипе ӑнланаҫҫӗ. Паллах, учитель малтанхи предложение хӑй туса кӑтартать. Предложени вӗҫӗнче сасӑ майӗпен анса татӑлнине ачасем кураҫҫӗ.

Ку таранччен вӗренекенсем хатӗр тӗслӗхсемпе ӗҫлерӗҫ. Малалла вӗсен ӗҫне — предложенисем тӑвассипе творчествӑллӑ ӗҫ — кӗртнӗ. Ана валли 10-мӗш хӑнӑхтару панӑ. Кашни ӳкерчӗкпе предложени хатӗрлемелле. Малтанхи предложение йӗркелеме учитель хӑй пулӑшать, ачасене ыйтусем парать.

Икӗ ача мӗн тӑваҫҫӗ?

Ответ: Икӗ ача пӑчкӑпа вутӑ татаҫҫӗ.

Ҫак майпа ӗҫлесе пур ӳкерчӗкпе те предложенисем тӑваҫҫӗ те, ҫыхӑнуллӑ текст пулать. Ҫак текста ят пама хушмалла.

Учебникри 10-мӗш хӑнӑхтару ачасене творчествӑллӑ ӗҫлеме пулӑшать.

Тепĕр сехетĕнче учитель предложени уйрăм сăмахсенчен тăнипе паллаштарать. Ана вĕренме пулăшакан хăнăхтарусем кĕнекере пур. Ку хăнăхтарусемпе ĕçленĕ май ачасем кашни предложенири сăмахсен шутне кăтартса параççĕ.

Тăван чĕлхе ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ хушăрах ачасене çутçанталăка, тавралăха сăнама вĕрентекен хăнăхтарусем те кĕртнĕ. Акă 11-мĕш хăнăхтару. Хĕлле. Унта ларгнă ыйтусем хĕл хăçан пуçланнине, унăн паллисене каласа пама хушаççĕ.

Учебникра чăваш чĕлхинчи предложенисем мĕнле йĕркеленсе тăнине пĕлмелли ĕçсем те пур.

12-мĕш хăнăхтарура предложенири сăмахсене пăтраштарса панă. Ачасен ĕçĕ — çав предложенисене тĕрĕс çыхăнтарса парасси. Паллах, ку ĕçре вĕсене пулăшса пымалла. Пĕрремĕш предложени епле йĕркеленсе пулнине учитель кăтартса памалла. Ытти предложенисене ачасем хăйсемех тума пултараççĕ.

Ачасен тавçăрулăхне аталантарас тĕлĕшпе чылай статьясем кĕртнĕ. Вĕсем хĕллехи çанталăк темипе çыханнă. Вĕренессе те ку темăна хĕлле вĕренеççĕ.

Учебник малалла вĕренекенсене сасăсемпе паллаштарать. Кашни сăмах уйрăм сасăсенчен тăрать. Сасăсемпе паллаштарма 13, 14, 15-мĕш хăнăхтарусем кĕртнĕ. Малтан уçă сасăсемпе паллаштармалла. Кĕнекере пĕр пек хупă сасăран тăракан сăмахсене панă, анчах вĕсенче уçă сасăсем тĕрлĕрен. Уçă сасăсем тĕрлĕрен пулни сăмахăн пĕлтерĕшне улăштарать. Учитель çак сăмахсене танлаштарса кăтартать: хыр-хир, шыв-шав, çыр-çĕр, кур-кŷр т. ыт. те.

Уçă сасăсем тĕрлĕрен пулни сăмах пĕлтерĕшне тĕпрен урăхлатать. Çакна ачасене хăйсене сăнаттармалла.

Сăмаха йĕркелес çĕрте сасă пысăк вырăн йышăннине, çавăнпа та çырнă чух пĕр саспалли вырăнне тепĕр саспалли çырма юраманнине асăрхаттарса хăвармалла.

Сăмаха каланă чух сасăпа калатпăр, кашни сассине уçăмлă та тĕрĕс каламалла, çырнă чух саспаллисемпе çыратпăр. Çак уйрăмлăха каллех палăртса хăвармалла. Пĕр сасă вырăнне тепĕр сасă каласанах урăх пĕлтерĕшлĕ сăмах пулса тăнине палăртмалла. Тĕслĕхрен, хыр сăмахри Ы вырăнне И каласан, йывăç вырăнне пачах урах сăмах — хир — пулса тăрать.

## 2 §. САМАХСЕНЕ ПЫСӐК САСПАЛЛИПЕ ҪЫРАССИНЕ ВӖРЕНТЕССИ *(1 сехет).*

Ку таранччен ачасем хӑҫан пысӑк саспаллипе ҫырмаллине вӗренмен-ха.

Ҫавӑнпа та малтан учитель предложени пуҫламӑшӗнчи сӑмаха класс доски ҫине мӗнле саспаллипе ҫырнине ачасене санама хушас пулать. Ачасем сӑнанӑ хыҫҫӑн хӑйсемех калама пултараҫҫӗ.

Предложение пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫыраҫҫӗ.

Учебникри 17-мӗш хӑнӑхтарупа ӗҫлемелле. Текстри кашни предложенири пӗрремӗш сӑмаха пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырнӑ. Учитель текстри кашни предложенисене ачасене вулаттарать те предложенин малтанхи сӑмахне тупатарать, ӑна мӗнле саспаллипе пуҫласа ҫырнине ыйтать.

Вӗреннине ҫирӗплетес тӗллевпе учитель ӑнлантару диктанчӗ ирттерет. Диктант текстне доска ҫине ҫырса памалла. Текста ҫыриччен кашни предложение вулаҫҫӗ, предложени пуҫламӑшӗнчи сӑмаха пысӑк саспаллипе ҫырмаллине пӑхаҫҫӗ; учитель ҫырса илнӗ чух малтанхи сӑмаха мӗнле ҫырмаллине, орфографи тӗлӗшӗнчен ытти сӑмахсене ҫырнӑ чух мӗн астумаллине асӑрхаттарать.

Вӗренекенсем кун хыҫҫӑн хӑйсен шкулти тетрачӗсем ҫине ӑнлантару диктантне ҫыраҫҫӗ. Ҫырнӑ май предложенири пӗрремӗш сӑмахӗсене аялтан пӗр йӗрпе туртса палӑртаҫҫӗ.

«Пӑр ҫинче» калава ҫырса илнӗ чух вӗренекенсен предложени ӑҫта вӗҫленнине хӑйсен тупмалла, ун хыҫҫӑнхи предложенин пӗрремӗш сӑмахне пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырмалла. Ку хӑнӑхтарӑва харпӑр хӑй тӗллӗн тума палӑртнӑ.

«Пирӗн колхоз» калавра тӑватӑ предложени. Вӗренекенсем шухӑш тӑрӑх предложени вӗҫне тупаҫҫӗ те унта точка лартаҫҫӗ. Ҫӗнӗ предложение пысӑк саспаллипе ҫырма тытӑнаҫҫӗ.

Тепӗр хӑнӑхтарӑва тунӑ чух предложение кирлӗ глаголсем хушса ҫыраҫҫӗ. Тӗслӗхрен. Эпӗ шкулта вӗренетӗп.

Кунсӑр пуҫне учитель уйрӑм калавсем вулаттарма пултарать. Ачасене калаври предложенисене туптарать. Предложенири малтанхи сӑмахсене пысӑк саспаллипе ҫырнине асӑрхама хушать.

## 3 §. КАЛУЛЛА, ЫЙТУЛЛА, ҪАШҪАРУЛЛА ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ *(3 сехет).*

Эпир калакан шухăш предложенире палăрать. Хамăр шухăша эпир пĕр сăмахпа та, ик сăмахпа та, йышлă сăмахпа та калама пултаратпăр. Кирек мĕнле предложени те пĕр-пĕр шухăша пĕлтерет.

Тĕслĕхрен: хура курак, лаша, пĕлĕтре, сарă, вĕрет. Ҫак сăмахсем е сăмах майлашăвĕсем предложени пулмаççĕ. Вĕсем нимĕнле шухăша та каласа пĕлтермеççĕ.

Предложенисене тĕрлĕ сасăпа лăпкăн каласа пама, кăшкăрса е ыйтса калама пулать.

Учебник ачасене малтан калуллă предложенипе паллаштарать.

Ку предложение вĕрентнĕ чух ачасене çак уйрăмлăхсене асăрхаттарма тăрăшмалла.

1) Калакан хăй шухăшне каласа пани.

2) Каланă чух сасă пĕр евĕрлĕ пулса пыни.

Калуллă предложени вĕçне точка лартма вĕрентессипе тимлĕн ĕçлеме хăнăхтарусем кĕртнĕ.

Ыйтуллă предложение вĕрентнĕ чух учителĕн хăйĕн кирлĕ сасăпа вуласа памалла. Вĕренекенсене те ыйту сăмахĕсене палăртса калама хăнăхтарса пымалла.

Кăшкăруллă предложенисене те калаканĕ хăй шухăшне хытă хумханса вăйлă сасăпа каланине учитель ачасене калама хăнăхтармалла. Хăнăхтарури ашшĕпе ывăлĕн калаçăвне икĕ ачана калаттармалла. Ачи ыйтуллă предложенисене калать, ашшĕ калуллă, юлашкинчен кăшкăруллă предложенипе ответлет. Ачасем çак калаçăва тĕрĕс сасăпа (интонаципе) вуласа пама пултарчçăр.

31-мĕш хăнăхтарура ачасене творчествăллă ĕç панă. Аслашшĕпе мăнукĕ телефонпа калаçнине илнĕ. Аслашшĕ мăнукĕнчен шкулта мĕнле вĕренни çинчен ыйтать, мăнукĕ ăна кирлĕ ответ пама тивĕç. Мĕнле ответ парасси кашни вĕренекен пултарулăхĕнчен килет.

Ку вăййа класрах иртерме май пур. Икĕ ачана икĕ çĕре тăратмалла, иккĕшне те картонран е урăх япаларан тунă телефон трубки тыттармалла. Пĕри кĕнеке çинчи ыйтусене калать, тепри ун çине ответсем парать, ыттисем вара вĕсен калаçăвне тимлĕн итлесе лараççĕ, хăшĕ те пулин йăнăшсан, ыттисем тӳрлетеççĕ.

Предложенисем çинчен вĕреннĕ чухне час-часах çыру ĕçĕсем иртермелле. Вĕсем предложенисене тĕрĕс çырма, кирлĕ çĕре чарăну палли лартма хăнăхтарса пыраççĕ.

Сăвăсем пăхмасăр калама вĕрентнĕ чух та тĕрлĕ сасăпа (интонаципе) каламалли предложенисем (калуллă, ыйтуллă, кăшкăруллă) тĕл пулаççĕ. Вĕсем те ачасем мĕн вĕреннине çирĕплетме пулăшаççĕ.

## 4 §. АЛФАВИТА ВĔРЕНТЕССИ *(4 сехет).*

Алфавита вĕрентесси чылай пысăк ĕç. Пирĕн малтан чăваш алфавитĕнчи сасăсен йĕркине асра тытма хăнăхтармалла, вĕсене чăвашла тĕрĕс калама вĕрентмелле: а, ă, бă, вă, гă, дă, е, ё (йо), жă, зă, и, йă, кă, лă, мă, нă, о, пă, рă, сă, çă, тă, у, ӳ, фă, хă, цă, чă, шă, щă, хытăлăх ъ палли, ы, çемçелĕх палли ь, э, ю (йу), я (йа).

Алфавит йĕркине пĕлни пурнăçра яланах кирлĕ. Списоксене, словарьти сăмахсене, карточкăсене, каталогри авторсен ячĕсене, нумай ĕçсене алфавитри саспаллисен йĕркипе параççĕ. Вĕренекен алфавита пĕлмест пулсан, орфографи е ытти словарьпе ĕçленĕ чух темĕн чухлĕ йывăрлăх курать, кирлĕ сăмаха ниепле те шыраса тупаймасть. Хăйĕн хаклă вăхăтне усăсăр шыраса ирттерет.

Ачасем алфавит йĕркине лайăх астуччăр тесен, пилĕкшер саспалли пăхмасăр калама хăнăхтармалла, кашни саспаллипе виçшер сăмах туптармалла. Учебника чылай хăнăхтару кĕртнĕ, хăнăхтарури сăмахсене алфавит йĕркипе çырса пама хушнă.

Алфавита вĕренессипе вăййăсем те ирттерме пулать. Ачасем карталанса тăраççĕ. Кашни ача пĕрер саспалли йышăнать. Вăййă пуçĕ хăйĕн саспаллипе сăмах калать, унăн кӳрши те пĕр тăхтаса тăмасăр хăйĕн саспаллипе пуçланакан сăмаха каламалла. Кам вăхăтра тупса калаймасть, вăл вăййă картинчен тухать. Вăййă малалла пырать, кашни ачана темиçе хутчен хăйĕн саспаллипе сăмах тупса калама тивет. Кам хăйĕн черетĕнче вăхăтра сăмах тупса калать, çавă вăййă картинче юлать, вăййăра çĕнтернĕ шутланать.

## 5 §. УÇĂ САСĂСЕМПЕ ХУПĂ САСĂСЕНЕ ВĔРЕНТЕССИ *(3 сехет).*

Малтанах уçă сасăсем çинчен вĕренмелле. Учитель уçă сасăсен пулăвĕпе паллаштарать. Уçă сасăсене калана чухне ӳпкерен тухакан сывлăш çăвар ăшĕпе пĕр чăрмавсăр тухать, çавăнпа та вăл сасăсене тăсса калама пулать.

Кашни сасӑ пулӑвӗпе кӑштах паллаштармалла. А сасса калама ҫӑвара анлӑ уҫмалла, чӗлхе хӑй вырӑнӗнчех выртать. Ӑ сасса каланӑ чухне чӗлхе ҫӳлерех ҫӗкленет те каялла туртӑнать, ҫӑвар кӑшт ҫеҫ уҫӑлать. У сасса каланӑ чух тута пӑрӑх пек ҫавракаланса малалла тӑсӑлать, тата ытти те.

Учитель уҫӑ сасӑ епле пулнине хӑй туса кӑтартать, ун хыҫҫӑн ачасене тума хушать.

Уйрӑмах, ӑ, ӗ, ӳ, о сасӑсене каланӑ чухне хӑшпӗрисем тӗрӗс мар тӑваҫҫӗ, сасӑсене арпаштарма пултараҫҫӗ. Ҫавӑн пекех ы-па и сасса пӑтраштарни те тӗл пулать. Учителӗн ку сасӑсене хӑйӗн туса кӑтартмалла, вӗсен хушшинчи уйрӑмлӑха палӑртмалла.

Кун пек чухне сасӑсене танлаштарса пӑхма май пур тӗслӗхсене илмелле:

Ир, Ира, ирӗм, илтӗм, тилӗ, тир(ӗ), пил, пир.

Ыр, ырӑ, ыраш, ылтӑн, тылӑ, тырӑ, пыл, пыр.

Ҫак сӑмахсене уйрӑм предложенисемпе памалла.

Ирпе Ира хире тухнӑ. Вӑл тилӗ курнӑ. Тилӗ тирӗ илемлӗ. Ыраш ылтӑн пек ырӑ тырӑ. Ыран ыраш вырма пыратпӑр. Тырра сыхла. Вӗлле хуртне ылтӑн хурт теҫҫӗ, вал пыл тӑвать. Пыл тутлӑ. Пыл ҫынна сипленме кирлӗ.

Ытти уҫӑ сасӑсемпе те ҫакӑн йышши ӗҫ туса ирттерсен, вӗренекенсем ӑ-па ӗ, у-па ӳ сасӑсене те пӑтраштарми пулаҫҫӗ. Учитель ачасене кӗнекере панӑ 42-мӗш хӑпӑхтарӑва сӑмахра сиктерсе. хӑварнӑ уҫӑ сасӑсене кӗртсе ҫырса илме хушать. Тата «Тракторпа» сӑвва ҫыртарса илтермелле те уҫӑ сасӑсене аялтан турттармалла, унтан сӑвва вулаттармалла, кайран сӑввӑн содержанийӗ тӑрӑх калаҫу ирттермелле.

Уҫа сасӑсемпе творчествӑллӑ ӗҫ те пама юрать. Ҫичӗ сӑмах панӑ: хӗлле, юр, пар, кӗрт, ҫунашка, йӗлтӗр, коньки сӑмахри кашни саспаллине уйӑрса вуламалла, уҫӑ сасӑсене кӑтартса памалла, юлашкинчен кашни сӑмахӗпе предложени туса ҫырмалла. Ҫак сӑмахсемпех ҫыхӑнуллӑ калав тума та юрать.

## Хупӑ сасӑсем.

Чӑваш чӗлхинче 22 хупӑ сасӑ: вӗсене каланӑ чух сывлӑш ҫулӗ тӗрлӗ чӑрмав тӗл пулать, ҫавӑнпа та пӗрисем ҫамӑллӑн, теприсем йывӑррӑн каланаҫҫӗ.

Анчах 1-мӗш класра хупӑ сасӑсене янӑраканнисемпе янӑраманнисем ҫине уйӑрса каламастпӑр. Учитель каш-

ни хупă сасă мĕнле пулни çинче çеç чарăнса тăрать, хăй туса кăтартать.

Учитель çакна та паллă тăвать: б, г, д, ж, з, ф, ц, щ сасăсемпе саспаллисем вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче тĕл пулаççĕ, тĕп чăваш сăмахĕсенче вĕсемпе усă курмаççĕ: билет, бригадир, герой, делегат, дежурнăй, журнал, завод, звено, фасоль, циркуль, цыган, площадь, щётка.

Янăраса илтĕнекен сасăсемпе малтан паллаштармалла: в, й, л, м, н, р. Юлашкинчен хĕсĕнсе тата палтлатса тухаканнисемпе: к, п, т, х, с, ç, ч, ш.

Чăрмавпа тата чăрмавсăр калакан хупă сасăсене танлаштарса памалла.

Акă Р-па П сасса танлаштарма юрать.

Р сасă чĕлхе вĕçĕпе сасă чĕлĕхĕсем чĕтреннипе пулать, янăраса илтĕнет, вăрăммăн тăсса тăма пулать.

П сасса вара тăсса калама çук. Ана каланă чух тута хĕррисем пĕрлешеççĕ те çăварти сывлăш çулне пӳлсе тăраççĕ. Çăвара тулнă сывлăш тутана тапса уçать. Çав вăхăтра П сасă каланса юлать.

Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ хупă сасăсене хыттăн та çирĕппĕн каламалла. Учитель малтан хăй калать, унтан вĕренекенсене калаттарать. Вĕсене сăмахра калама хăнăхтарас пулать. Хăнăхтару ĕçĕ валли çакăн пек сăмахсем сĕнме пултаратпăр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| багаж | газ | дача | жакет | завод |
| база | галстук | дворник | журнал | завуч |

Сăмахсенче миçе уçă сасă пулнине сăнама 49-мĕш хăнăхтару панă. Халлĕхе виçĕ уçă саспаллиллĕ сăмахсене çырса илме пани çителĕклĕ. Пĕр, ик, виç уçă саспаллирен тăракан сăмахсене хăйсене те тупма хушмалла.

Уçă саспаллирен пуçланакан хĕрачасемпе арçын ачасен ячĕсене çырма хушмалла, ку вĕсемшĕн интереслĕ еç. Кунта вырăс чĕлхинчен кĕнĕ ятсене анчах мар, пирĕн тĕп чăвашсен ячĕсене те туптармалла.

Кунта учитель ачасене хăй çакăн пек ĕç те хушма пултарать.

Сăмахра виç саспалли —
Кирек мĕнле эс вула,
Пулать вăл тасатмалли.
Мĕн вăл? (Ала).
Унпа утса çӳретĕн,

Таçта çитсе килетĕн,
Ун умне — Т хушатăн,
Çӳçе тытса туратăн.
(Т-ура).

## 6 § САМАХСЕНЕ ПĔР ЙĔРКЕРЕН ТЕПĔР ЙĔРКЕНЕ КУÇАРАССИ *(2 сехет).*

Вĕренекенсен сăмахсене сыпăксем çине пайлама пĕлмелле. Сыпăксем тăвасси сăмахри уçă сасăсенчен килет. Сăмахра миçе уçă сасă, çавăн чухлĕ сыпăк пулать. Уçă сасăпа хупă сасă пĕрле сыпăк тăваççĕ: ан-не, ар-лан, ал-са, ин-ке, ăс-та, ых-ра, ӳп-ке, ӳс-лĕк. Сыпăк уçă сасăпа та, хупă сасăпа та пуçланма пултарать. Уçă сасăпа пуçланакан сыпăк çăмăллăн пуçланать те час татăлать. Хупа сасăпа пуçланакан сыпăк уçă сасăпа вĕçленнĕ чух вăрăммăн каланать, тăсса тăма та пулать: кĕ-вен-те, кĕне-ке, ку-ça-ру, кӳ-ре-нӳ, пă-хă-ну.

Малтан вĕренекенсене пĕр сыпăклă сăмахсемпе паллаштармалла: çу, пӳ, аш, ял, унтан икĕ сыпăклисемпе: ап-па, ат-те, пă-тă, пă-та, ху-ла. Икĕ сыпăклă сăмахсемпе ĕçленĕ чух çакна та асăрхаттармалла: уçă сасă пĕччен тăнă чух та сыпăк тума пултарать: а-тă, ĕ-не, ă-вă, ă-шă, и-лем, а-ла, ы-раш, ы-ран.

Малалла виçĕ тата тăватă сыпăклă сăмахсемпе ĕçлемелле. Паллах, ачасене çывăх сăмахсем памалла: кă-мака, ас-ат-те, вĕ-ре-нӳ, пу-лă-çă, пу-лă-шу, са-вă-нăç-ла, çĕн-те-рӳ-çĕ, çут-çан-та-лăк, хĕ-вел-ту-хăç, ял-ху-ça-лăх.

Сăмахсене сыпăксем çине пайлама вĕреннĕ хыççăн пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарма хăнăхтарса пымалла. Ку ĕçре чылай йывăрлăхсем тĕл пулаççĕ.

Паллах, 1-мĕш класри вĕренекенсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарас пур правилăсемпе те паллаштарма май çук. Анчах та паллăрах правилăсем çинче чарăнса тăмалла.

Çырнă чух сăмах пĕр йĕркене кĕмест пулсан, ăна тепĕр йĕркене сыпăксем çине пайласа куçармалла.

1. Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чухне хупă сасса хăй хыççăн тăракан уçă сасăран уйăрма юрамасть: ту-рат, ту-тăр, ты-мар.

2. Пĕр уçă саспаллинчен çеç тăракан сыпăка çав йĕркерех хăварма та, тепĕр йĕркене куçарма та юрамасть, ăна ун хыççăн тăракан е умĕн тăракан сыпăкпа пĕрле

илмелле: упа-те, умăн-та, ура-та, каю, ка-кая, каю-ра.

3. Ъ, ь саспаллисене хăйсен умĕнчи хупă саспаллинчен уйăрмалла мар: мăрь-ере; медаль-пе.

4. Сăмах тĕпĕнче икĕ пĕр пек хупă сасă пулсан, вĕсене икĕ енне пайласа куçарма пулать: ан-не, ат-те, ап-па, пич-ке, кук-ка, сас-си.

Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чух ачасем сахал мар йăнăшсем тăваççĕ. Вăл йăнăшсем çак темăна ачасем ăнланса çитменнипе пулаççĕ.

Сăмахри уçă сасă хăш вырăнта тăнине пăхмасăр, ăна хупă сасăпа пĕрлештерсе, сыпăк тăваççĕ те тепĕр йĕркене куçарма васкаççĕ. Анчах та сăмах пуçламăшĕнчи е сăмах вĕçĕнчи уçă сасăсем уйрăм сыпăк тумаççĕ, вĕсене тепĕр йĕркене куçарма кирлĕ мар: ака-пуç, ура-па, мăрье, çемье.

Учитель урокра чылай тĕслĕхсем илсе парать, пĕр енчен тепĕр енне куçарма çук сăмахсем çинчен чарăнса тăрать: упа, ура, Атăл, урăх, ырă, улăх.

Кĕнекере вĕрентнĕ темăна çирĕплетме хăнăхтарусем кĕртнĕ.

Паллах, учитель учебникри хăнăхтарусемсĕр пуçне хăй хатĕрленĕ (хăнăхтарусемпе) текстсемпе те ĕçлемелле.

## 7 §. ХЫТĂ УÇĂ САСĂСЕМПЕ ÇЕМÇЕ УÇĂ САСĂСЕМ

*(2 сехет).*

Чăваш чĕлхинче 9 уçă сасă. Вĕсем икĕ пая пайланаççĕ: çемçе уçă сасăсем (э (е), ĕ, ӳ, и), хытă уçă сасăсем а, ă, о, у, ы.

Çемçе уçă сасăсене каланă чухне чĕлхе малалла туртăнать те унăн вĕçĕ аялти шăлсене перĕнсе тăрать. Вĕсем мĕншĕн çемçен илтĕнеççĕ-ха?

Э(е), ĕ, ӳ, и сасăсене каланă чух ӳпкери сывлăш карланкăри сасă чĕлĕхĕсене хуллен çеç сĕртĕнсе иртет те çăвара тухать. Çăвар ăшĕнчи шăнăрсем те хытсах тăмаççĕ. Çавна пула сывлăш çăвар маччин çумĕпе çемçен кăна шăвăнса иртет.

Çемçе уçă сасăсемпе юнашар тăракан хупă сасăсем те çемçен илтĕнеççĕ: этем, ĕмĕт, ӳкерчĕк, икерчĕ.

Хытă уçă сасăсене каланă чухне чĕлхе каялла туртăнса илет те унăн кайри çăвар маччин çемçе пайĕ

патнелле ҫӗкленсе илет. Ӳпкерен тухакан сывлӑш карланкӑри карӑнса тӑракан сасӑ чӗлӗхӗсене хыттӑн пырса ҫапӑнать те, кирлӗ уҫӑ сасӑ туса, чӗтретсе иртет. Вӑл сасӑсене янӑравлӑ та хытӑ илтӗнме ҫаварти шӑнӑрсем те пулӑшаҫҫӗ. Ҫавна пула вӑл сасӑсене хыттӑн калаҫҫӗ, нумай вӑхӑт тӑсса тӑма та пултараҫҫӗ. Хытӑ сасӑпа юнашар тӑракан хупӑ сасӑсем ҫемҫелмеҫҫӗ, хыттӑн илтӗнеҫҫӗ: арлан, автан, ыхра, ылтӑн, ӑман. Кӗнекере хытӑ уҫӑ сасӑсемпе ҫемҫе уҫӑ сасӑсенчен тӑракан сӑмахсене танлаштарса кӑтартнӑ. Вӗренекенсем вӑл сӑмахсене вуланӑ май туяҫҫӗ: пӗрисем хыттӑн каланаҫҫӗ, теприсем—ҫемҫен. Ҫав сӑлтав уҫӑ сасӑсенчен килнине учителӗн ӑнлантарса парас пулать.

## 8 §. ХЫТӐ СЫПӐКСЕМПЕ ҪЕМҪЕ СЫПӐКСЕМ
*(2 сехет).*

Хытӑ уҫӑ сасӑпа хупӑ сасӑ хытӑ сыпӑк, ҫемҫе уҫӑ сасӑпа хупӑ сасӑ ҫемҫе сыпӑк тунине малаллахи хӑнӑхтарусенче кӑтартса панӑ. Темӑна ӑнлантарма уҫӑ сасӑллӑ сыпӑксене илмелле, вӑл ачасене ӑнлантарма ҫӑмӑллатать.

Учебникра хытӑ тата ҫемҫе сыпӑксене аван танлаштарнӑ. Вӗсене ачасен пӑхмасӑр калама пӗлни кирлӗ мар, ӑнланса илни кирлӗ. Хӑнӑхтарусене тунӑ чух ачасене хытӑ сыпӑксене аялтан пӗр йӗрпе, ҫемҫе сыпӑксене икӗ йӗрпе туртма хӑнӑхтармалла.

72-мӗш хӑнӑхтарӑва тунӑ чух ачасен чылай шухӑшлама тивет. Сӑмахӑн малти е кайри сыпӑкне ҫеҫ панӑ, тепӗр сыпӑкне ачасен хӑйсен тупса ҫырмалла. Пӗр тӗслӗхне учителӗн хӑйӗн туса памалла.

73-мӗш хӑнӑхтару вӗренекенсене хӑйсене темиҫешер тӗслӗх хытӑ сыпӑксенчен, ҫемҫе сыпӑксенчен тӑракан сӑмахсене шутласа тупма хушать. Вӗренекенсем хӑйсем тӗллӗн ҫемҫе, хытӑ сыпӑклӑ сӑмахсене тупса ҫыраҫҫӗ.

## 9 §. ХЫТӐ СӐМАХСЕМ, ҪЕМҪЕ СӐМАХСЕМ, ХУТӐШ СӐМАХСЕМ *(3 сехет).*

Пуплеври сӑмахсем хытӑ, ҫемҫе, хутӑш пулаҫҫӗ. Ҫакӑн пек пуласси вӑл каллех уҫӑ сасӑсенчен килет. Хытӑ уҫӑ сасӑсемпе хупӑ сасӑсем хытӑ сыпӑк тӑваҫҫӗ тенӗччӗ. Сӑмахри сыпӑксем пурте хытӑ пулсан, хытӑ сӑмах пулать. Хытӑ сӑмахри хупӑ сасӑсем те хыттӑн илтӗнеҫҫӗ.

Учитель çак темăпа паллаштарма уйрăм сăмахсем илсе кăтартать: а-ча, ап-па, ла-ша, çу-наш-ка т. ыт. те. Вĕренекеннине çирĕплетме «Шăнкăрч йăви» калава ачасене хăйсен тетрачĕсем çине çыртарать те хытă сăмахсене аялтан пĕр тӳрĕ йĕрпе турттарать. Пĕрремĕш сăмахне доска çине çырса хăй туса кăтартать.

Çак темăпах творчествăллă ĕçсем кĕртнĕ. «Юратнă йăмăкăм» калава ачасен хăйсен çырса пĕтермелле, учитель мĕнле хытă сăмахсем кĕртсе çырма май пуррине малтан палăртмалла. Йăмăкĕ çук ачасен шăллĕ çинчен çырмалла. Вĕренекенни çемьере чи кĕçĕнни пулсан, вара унăн хăйĕн аппăшĕ е пиччĕшĕ çинчен çырма юрать.

Учебник тата çемçе сăмахсен пулăвĕпе паллаштарать. Çемçе уçă сасăсем çемçе сыпăксем тăваççĕ. Çемçе сыпăксенчен тăракан сăмах çемçе сăмах пулать. Çакăн çинчен вĕрентме учитель çемçе сăмахсем тупса кăтартать. Ун хыççăн хăйех çемçе сăмахсенчен кăна тăракан калава вуласа е доска çине çырса кăтартма пултарать.

## ТӲПЕ.

Сенкер тӳпе. Тӳпе пит инçе. Илемлĕ тӳперен хĕвел хĕртет. Çил тӳпене пĕлĕтсем те илсе килет. Тӳпере чĕкеçсем те вĕçеççĕ. Тӳпе тинĕс пек сенкер те хитре.

Çемçе сăмахсенчен кăна калав епле çемçен те кĕвĕллĕ илтĕннине ачасене сăнаттармалла. Вăл пирĕн чĕлхене çепĕç тунине палăртса хăвармалла.

Çавна май чăваш чĕлхи çинчен çырнă калава пăхса тухаççĕ. Ачасене унта мĕн çинчен çырнине ăнлантарнă хыççăн, хытă тата çемçе сăмахсене çыртарса илмелле.

Юлашкинчен хутăш сăмахсем çинче чарăнса тăмалла.

Учитель хутăш сăмахсем çинчен каласа парать. Чăваш чĕлхи сасăсен килĕшĕвне пăхăнса аталаннăран хутăш сăмахсем тĕп сăмахсенчен сахалтарах тĕл пулаççĕ. Пăри, пăши, путене, пукане, учитель, пионер, поэт, директор, музей т. ыт. те.

Хутăш сăмахсене вĕрентме ансат тĕслĕхсем илсе памалла: атте, анне, перо, шăши, пукане, путене. Ачасене хутăш сăмах пĕлтерĕшне ăнлантармалла. Çак хутăш сăмахсене хытă е çемçе сăмахсене каланă пекех чĕлхе çăмăллăн калать-и е вĕсене калама йывăртарах —ачасене

çакна сăнаттармалла. Танлаштарма çакăн йышши сăмахсем илмелле:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Анна | тăван | мăнă | пăра |
| анне | диван | мина | пăри |

Вĕсен хушшинчи уйрăмлăха асăрхасан, малалла хăнăхтарусемпе ĕçлемелле.

«Мĕнле çырмалла» статьяна пăхнă чух ачасене ун содержанине ăнлантармалла, унтан пĕтĕм вĕреннĕ темăпа ĕçлемелле. Ачасем çак текста çырса илнĕ май хытă, çемçе, хутăш сăмахсене аялтан кирлĕ йĕрпе туртса палăртма пултарни тĕп вырăн йышăнать. Вĕреннĕ темăна ăнланмасăр ку ĕçе тума май çук. Хăйне май ку тĕрĕслев ĕçĕ шутланмалла.

## 10 §. ЯПАЛАНА ПĔЛТЕРЕКЕН САМАХСЕНЕ ВĔРЕНТЕССИ.

Ачасем япалана пĕлтерекен сăмахсем çинчен пуçласа илтеççĕ. Вĕсемшĕн грамматикăри япалана пĕлтерекен сăмах тени çĕнĕ. Учитель майĕпен сăмахăн пĕлтерешĕпе паллаштарать.

Темăна вĕрентнĕ чух учителĕн класа уйрăм япаласем илсе пымалла. Кунсăр пуçне кĕнекере япаласен ÿкерчĕкĕсене кĕртнĕ. Пĕрремĕш ретри япаласене пĕлтерекен сăмахсен ятне ÿкерчĕк айне çырса паман, ачасем хăйсем тупса калаççĕ: хур, автан, чăхă, кăвакал (килти кайăк-кĕшĕксем). Иккĕмĕш ретри япаласен ячĕсене малтан ачасене калаттармалла, унтан айне çырнине вулаттармалла, ÿкерчĕкри япаласем мĕнле ыйту çине ответленине те каласа памалла. Кĕнекере мĕн? ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене малтан панă.

Учитель мĕн? ыйтупа ыйтăнакан сăмахсемпе вĕренекенсене тĕслĕхсем туптармалла тата çыртармалла.

Япалана пĕлтерекен сăмахсем пĕлтерĕшне кура ушкăнсем çине пайланаççĕ.

Çак ыйтăва çăмăлтарах ăнлантарма ачасем пĕлекен, вĕсен пурнăçĕпе çывăх япаласене илсе памалла. Акă тĕслĕхрен пахчара ÿсекен çимĕçсене ачасем, пĕчĕкренех курса, çисе ÿсеççĕ: кăшман, хăяр, кишĕр, помидор — пурте пахчара ÿсекен çимĕçсем. Япалана пĕлтерекен сăмахсем çинчен пĕтĕмĕшле ăнлантарнă хыççăн кам? ыйтури сăмахсене вĕрентмелле.

Кам? тесе ыйтăнакан сăмахсене ушкăнласа пама хăнăхтармалла. Малтан çемьери çынсене: атте, анне, пичче, аппа, шăллăм, йăмăк — пурте кам? тесе ыйтăнаççĕ.

Унтан ачасен юлташĕсене илсе памалла. Çынсем мĕнле ĕçпе пурăннине, обществăри ятсене, пĕлĕш-тантăшсене, тăван-хурăнташсене илсе ушкăнласа кăтартмалла. Пур чухне те ачасене ыйту лартма вĕрентмелле.

Кун хыççăн мĕн? тесе ыйтăнакан япала ячĕсемпе ĕçлемелле, вĕсем ытти пур япаласене кăтартнă чухне мĕн? ыйту çине ответлеççĕ.

Чăваш чĕлхинче чĕрчунсем те, ӳсентăрансем те мĕн? тесе ыйтăнаççĕ. Лаша куртăм. Мĕн куртăм? Вăрманта юман ӳсет. Мĕн ӳсет? Мĕн? тесе ыйтăнакан япалана пĕлтерекен сăмахсене те ушкăнлама вĕрентмелле. Ачасем усă куракан вĕренӳ япалисене, класри япаласене, пахчари çимĕçсене, уйра ӳсекен тырпула, кайăк-кĕшĕксене, йывăç-курăксене, машинăсене т. ыт. япаласене ушкăнлама хăнăхтарса пымалла. Çаксем пурте мĕн? ыйту çине ответленине асăрхаттармалла.

Çак темăпах тупмалли юмахсем панă. Вĕсем ачасен тавçăрулăхне ӳстерме пулăшаççĕ. Малтан 37-мĕшпе 42-мĕш страницăсенчи мĕн? ыйтупа ыйтăнакан тупмалли юмахсен тупсăмне пĕлмелле.

99-мĕш хăнăхтарура вĕренекенсен хăйсен кам? тата мĕн? ыйту çине ответлекен сăмахсем тупса çырмалла.

Çак темăна вĕреннине çирĕплетме тата тĕрĕслеме кĕнекере хăнăхтарусем панă. Ку хăнăхтарусем ачасене тăван чĕлхене тарăнрах ăнланса илме пулăшаççĕ. Халиччен ачасем пĕрреллĕ хисепри япалана пĕлтерекен сăмахсем çинчен вĕреннĕччĕ. Учитель япалана пĕлтерекен сăмахсем нумайлă хисепре те пулма пултарнипе паллаштарать. Ăна валли вăл класри сĕтел çине пĕр енне пĕр кĕнеке, тепĕр енне темиçе кĕнеке пырса хурать.

— Ку мĕн? — тет учитель пĕр кĕнеке çине кăтартса.

— Кĕнеке, — теççĕ ачасем.

— Ку мĕн? — тет учитель, темиçе кĕнеке çине кăтартса.

— Кĕнекесем, — теççĕ ачасем.

Учитель кĕнеке тата кĕнекесем сăмахсене доска çине çырса парать.

Ачасем çакна лайăх ăнланса илеççĕ: пĕр япала тата нумай япаласем пулаççĕ, япаласем нумай чухне сăмах



147769 ув

тĕпĕ çумне *-сем* сыпăк хушăнать. Япаласене пĕлтерĕш тĕлĕшĕпе ушкăнлама вĕренессипе кĕнекере хăнăхтарусем йышлă. Вĕсене сывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене пĕтĕмлетсе ят пама вĕрентмелле.

114-мĕш хăнăхтарура творчествăллă ĕç панă. Кунта кăнтăр енне каякан кайăксен ӳкерчĕкĕсем пур. Вĕренекенсен ӳкерчĕкри кайăк ячĕсене пĕлмелле те каламалла. Унтан нумай пăнчăсем вырăнне кирлĕ саспаллисем кĕртсе çырмалла.

Вĕçен кайăксем çинчен калаçу ирттермелле, вĕсене çуркунне мĕнле кĕтсе илмелли çинчен ачасене хăйсене калаçтармалла.

## 11 §. ÇЫН ЯЧĔСЕНЕ, АШШĔ-АМĂШĔ ЯЧĔПЕ ХУШАМАЧĔСЕНЕ ПЫСĂК САСПАЛЛИПЕ ПУÇЛАСА ÇЫРАССИ *(5 сехет).*

Ачасене çын ячĕсене, ашшĕ-амăшĕсен ячĕсене, хушамачĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырасси çинчен вĕрентнĕ чух усă курма учебникра пилĕк ача ӳкерчĕкне панă. Вĕсен айне ачасен ячĕсене çырнă. Учитель ӳкерчĕксемпе ĕçленĕ май ачасен ячĕсене вулаттарать те ятсенчи малтанхи саспаллине пысăкпа çырнине асăрхама хушать. Ӳкерчĕксене пăхса тухнă хыççăн Ванюк, Таня, Гриша, Верук, Анюк ячĕсене мĕншĕн пысăк саспаллипе пуçласа çырнине ыйтса пĕлет.

Вĕренекенсем хăйсемех тавçăрса илеççĕ. Вĕсем çын ячĕсем. Çын ячĕсене пысăк саспаллисенчен пуçласа çыраççĕ, теççĕ.

Учитель, вĕренекенсене доска умне кăларса, хăйсен ячĕсене çыртарма пултарать, ăна тĕрĕс çырнипе çырманнине класра тĕрĕслеттерет.

«Альтукпа шăллĕ» ӳкерчĕксем тăрăх çыхăнуллă калаçу ирттермелле. Çыхăнуллă калаçу ирттернĕ чух ӳкерчĕкри кашни çын ячĕпе хушаматне, пĕр ӳкерчĕкĕн содержанине тепĕр ӳкерчĕкĕн содержанипе çыхăнтарса памалла. Çыхăнуллă калаçура ӳкерчĕксен йĕркине асра тытмалла.

Калаçу хыççăн кĕнекере панă ыйтусем çине ачасен ответлесе çырмалла.

## 12 §. ЧӖРЧУН ЯЧӖСЕНЕ ПЫСӐК САСПАЛЛИПЕ ПУҪЛАСА ҪЫРАССИ *(1 сехет).*

Ҫын ячӗсене анчах мар, выльӑх-чӗрлӗх ячӗсене те пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫыраҫҫӗ.

Учитель доска ҫине «Улайпа Эскам» йытӑ ячӗсене ҫырать, учебникри статьяна вуласа парать, йытӑ ячӗсене мӗншӗн пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырнине ачасене калаттарать. Вӗренекенсем чылайӑшӗ тавҫӑрса илеҫҫӗ: вӗсем йытӑ ячӗсем, ҫавӑнпа та пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырмалла, теҫҫӗ.

Кӗнекери 124-мӗш хӑнӑхтарӑва тума пуҫличчен учитель йытӑсен, лашасен ячӗсем ҫинчен каласа пама пултарать е вӗренекенсене хӑйсене аса илме хушать. Ҫакӑн хыҫҫӑн 124-мӗш хӑнӑхтарӑва ачасем пӗр пӑтраштармасӑр тума пултараҫҫӗ. Шкул ачисене выльӑх-чӗрлӗх ячӗсене пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырма вӗрентес ӗҫре ӳкерчӗксем кирлӗ вырӑн йышӑнмалла. Вӗсене тӗрлӗ тӗслӗ сӑрӑпа пичетленӗ пулсан, пахалӑхӗ татах та ӳснӗ пулӗччӗ.

## 13 §. ХУЛА, ЯЛ, УРАМ, ЮХАНШЫВ ЯЧӖСЕНЕ ПЫСӐК САСПАЛЛИПЕ ПУҪЛАСА ҪЫРАССИ *(1 сехет).*

Ку темӑпа учебникри статьясене вулама тытӑниччен ачасем пӗлекен ял-хула ячӗсене аса илтермелле. Вӑл ятсене учителӗн доска ҫине ҫырса памалла е вӑл ятсем малтан ҫырса хатӗрленӗ плакатра пулмалла.

126-мӗш хӑнӑхтарӑва тунӑ чух та ҫакӑн пек улшӑну тума май пур. Пӗрремӗш предложенире Шупашкар ҫывӑхӗнчи Илпеш ялне кӑтартнӑ. Ун вырӑнне ачасем хӑйсен ялне илсе пама пултараҫҫӗ.

127-мӗш хӑнӑхтару вара ачасене творчествӑллӑ ӗҫлеме пулӑшать. Кашни вӗренекен хӑйӗн ял ятне, унпа юнашар ытти ялсемпе хула ячӗсене ҫырса параҫҫӗ. Учитель хулапа ял ячӗсене чӑвашла мӗнле калаҫҫӗ, ҫавна ҫырма хушать. Хӑшӗ-пӗрисем халь чӑваш ялӗпе хули ячӗсене те вырӑсла калама тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫав ял-хуласен чӑвашла ячӗсем ӗлӗк-авалах пулнӑ. Ҫавӑнпа та чӑваш чӗлхи урокӗнче вӑл ятсене чӑвашла ҫырма хӑнӑхмалла. Мӗне кирлӗ-ха Шупашкара Чебоксары, Сӗнтӗрвӑррине Марпосад, Ҫӗрпӗве Цивильск, Тӑвая Янтиково, Шӗнерпуҫне Бичу-

рино, Шурчана Акрамово тесе çырни! Чăваш чĕлхи урокĕнче чăвашла ятпа калама та, çырма та хăнăхтармалла.

Пайăр ятсем шутне юханшыв, кӳлĕсем, сăрт-тусем, çырма-çатрасем те кĕреççĕ.

Учебник юханшыв ячĕсемпе паллаштарать. Чăваш республикинчи чылай шыв ячĕсемпе хăнăхтарусем кĕртнĕ.

128-мĕш хăнăхтарупа ĕçленĕ чух учитель «Пирĕн шывсем» статьяра шыв ячĕсене мĕнле çырнине сăнама, мĕншĕн пысăкпа çырнине калама хушать.

Вĕренекенсем статьяри шыв ячĕсене тупса параççĕ, мĕнле çырнине те каласа хăвараççĕ.

### 14 §. ЯПАЛА ПАЛЛИНЕ ПĔЛТЕРЕКЕН САМАХСЕНЕ ВĔРЕНТЕССИ *(4 сехет).*

Япалана пĕлтерекен сăмахсене вĕрентнĕ хыççăн вĕсен паллине кăтартакан сăмахсемпе паллаштармалла. Япаласен паллине вĕрентес çĕрте тĕрлĕ япаласемпе усă курмалла. Пуçламăш шкулта япалана кăтартса вĕрентесси пысăк вырăн йышăнмалла.

Чăннипех те, вĕрентӳ ĕçĕ ăнăçлă пултăр тесен, çак темăна вĕрентнĕ чухне «Тăван чĕлхери» предложенисене вулаттариччен класа темиçе япала илсе пымалла: хĕрлĕ чечек е хĕрлĕ пĕчĕк ялав, сарă, симĕс йывăç çулçисем, кăвак кăранташ т. ыт. те. Учитель ачасене çак япаласене сăнама сĕнет, унтан вĕсен тĕсĕ çинчен ачасенчен ыйтать те кашни япала мĕнле тĕслĕ пулнине доска çине çырса хурать.

Малтан япалана пĕлтерекен сăмахсене, унтан япалан паллине пĕлтерекен сăмахсене ачасене сăнаттарать.

Хĕрлĕ чечек. Кăвак пĕлĕт. Çĕнĕ пӳрт. Пысăк шкул. Сарлака, таран пĕве.

Ыйту: Мĕнле чечек?— Хĕрлĕ.

— Мĕне кăтартать?— Тĕсе. Чечек тĕсне.

Ыйту: Мĕнле пӳрт?— Çĕнĕ.

— Мĕне пĕлтерет?— Пӳрте анчах тунине.

Ыйту: Мĕнле шкул?— Пысăк.

— Мĕне кăтартать?— Шкул пысăкăшне.

Учитель эвристикăллă калаçу меслечĕпе япаласен паллине кăтартакан сăмахсемпе паллаштарать. Вĕсем япалан тĕсне, калăпăшне, пысăкăшне, çĕннипе киввине, çирĕплĕхне, йывăрăшне кăтартма пултараççĕ.

Класрах 131-мĕш хăнăхтарăва пăхса тухаççĕ. Мĕнле? тесе ыйтăнакан сăмахсем япаласен паллисене тĕрлĕ енчен кăтартнипе паллашаççĕ. Учитель вĕренекенсене хайсене япаласен паллине кăтартакан сăмахсене туптарать.

Учитель пулăшнипе вĕренекенсем урокра мĕн вĕреннине пĕтĕмлетме пултараççĕ.

Япала паллине кăтартакан сăмахсем хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулнине 132, 135-мĕш хăнăхтарусем уçса параççĕ.

Ăшă çу иртрĕ, сивĕ хĕл çитрĕ.

«Ăшă» япалан паллине хирĕç «сивĕ» япалан палли. Çулталăкри пĕр пулăма тепĕр пулăм хирĕçлет.

Кĕнекере çакна шута илсе, кирлĕ хăнăхтарусем панă.

135-мĕш хăнăхтарура хирĕçле пĕлтерĕшлĕ япала паллине кăтартакан сăмахсем тупса памалла.

Тĕслĕхрен «ăшă мунча» панă, ăна хирĕçле пĕлтерĕшлĕ япала ячĕпе ун паллине кăтартакан сăмах пĕрлешĕвĕсем тупса памалла.

Ăшă мунча — сивĕ нӳхреп.

Çак майпа 135-мĕш хăнăхтарăва класрах туса ирттермелле:

Тĕттĕм кĕтес — çутă пӳлĕм
Тутлă пыл — йӳçĕ улма
Вăрăм çул — кĕске кăранташ
Кивĕ çурт — çĕнĕ кĕнеке
Хытă юман — çемçе çăка

Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ япала паллине кăтартакан сăмахсемпе предложенисем тума хăнăхтармалла, ун йышши ваттисен сăмахĕсене туптармалла.

Кун хыççăн япала паллине кăтартакан пĕр пĕлтерĕшлĕ самахсем панă. Вĕсем япалан паллине витĕмлĕрех, лайăхрах кăтартса параççĕ.

Акă хитре пĕлтерĕше япала паллине кăтартакан çак сăмахсемпе калама май пур: илемлĕ, чипер, хӳхĕм, кĕрнеклĕ, йăлттам, маттур.

Е хăюлăха кăтартакан паллă ячĕсем: хăюллă, харсăр, çивĕч, чăрсăр, паттăр этем, салтак, лётчик. Кунсăр пуçне япалана тĕрлĕ енчен палăртса калакан сăмахсем пулаççĕ.

Çăмламас пысăк хура йытă.

Пĕрремĕш сăмахĕ йытă ытла çăмлă пулнине пĕлтерет, иккĕмĕшĕ — пысăкăшне, виççĕмĕшĕ — тĕсне кăтартать.

Кунта япалан паллине тĕрлĕ енчен илсе панă.

Учитель ачасене 136-мĕш хăнăхтарăва класра тутарать. Япалан пĕр паллине кăтартнă, ытти паллисене те, япалисене те ачасен хăйсен шутласа çырмалла. Япала ячĕсене хăнăхтару айне панă.

Пĕр тĕслĕхне учитель хăй туса парать, ыттисене ачасем хăйсем тупса çыраççĕ.

Выçă, хаяр, çăткăн кашкăр, хĕрлĕ, чее, ултавçă тилĕ.

Ĕçчен, çивĕч, сăрă пакша. Хăравçă, шиклĕ, мĕскĕн мулкач. 137-мĕш хăнăхтарура япаласене те, вĕсен паллине кăтартакан сăмахсене те пăтраштарса панă, ачасен вĕсене тĕрĕс çыхăнтарса çырса памалла. Вăл çакăн пек пулма кирлĕ: ĕçчен пакша, хăравçă мулкач, хаваслă ача, сивĕ хĕл, тĕттĕм каç, вăйлă трактор.

141-мĕш хăнăхтарура япала ячĕсене малтанхи ретре, вĕсен паллине кăтартаканнисене тепĕр ретре панă.

Вĕренекенсен мĕнле? ыйту çине ответлекен кирлĕ сăмаха тупса çырмалла. Отвечĕ çапла пулмалла: шурă хурăн, тăрă шыв, тутлă панулми, пысăк хула, симĕс вăрман, кăвак тинĕс, хитре кайăк, çӳхе кĕнеке.

142-мĕш хăнăхтару япала ячĕсен тĕрлĕ йышши паллисене тупса çырма хушать.

Паллах, учитель малтан арбуз, кĕнеке, курăк сăмахсен мĕнле-мĕнле паллисем пурри çинчен калаçу ирттермелле, вара вĕренекенсем тĕрĕс ответлеме пултараççĕ.

Отвечĕсем çакăн пек пулаççĕ.

1. Çемçе, тутлă, сĕтеклĕ арбуз.

2. Илемлĕ, лайăх, интереслĕ, хулăн кĕнеке.

3. Çӳллĕ, парка, сĕтеклĕ, симĕс курăк.

Вĕренгӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас çĕрте ваттисен сăмахĕсем питех те вырăнлă. Ваттисен сăмахĕсем ачасен пĕлĕвĕпе тавракурăмне ӳстерме пулăшаççĕ. Учителĕн вĕсен пĕлтерĕшне уçса памалла. 144-мĕш хăнăхтарăва япаласен паллисене кăтартакан ваттисен сăмахĕсем кĕртнĕ, вĕсен пĕрремĕш пайне çырса панă, иккĕмĕш пайне ачасен хăйсен çырса пĕтерес пулать. Ачасен ĕçне çăмăллатас тесе, хăнăхтару айне вĕсен иккĕмĕш пайне те кĕртнĕ, анчах ăна çӳлте панă йĕркепе мар, пăтраштарса пана. Вĕренекенĕн хăйĕн тавçăрса илес пулать.

Тĕслĕхрен: Уй куçлă, вăрман хăлхаллă. Вĕренекенсем «вăрман хăлхаллă» пайне хăйсем хушса çыраççĕ, япала паллине кăтартакан сăмахсене аялтан туртса палăрт-

малла. Япала паллине кăтартакан ваттисен сăмахĕсене, тупмалли юмахсене килте çырса килме хушмалла.

### 15 §. ЯПАЛАСЕН ĔÇНЕ ПĔЛТЕРЕКЕН СĂМАХСЕНЕ ВĔРЕНТЕССИ *(5 сехет).*

Вĕренекенсем япаласен ячĕсене, вĕсен паллисене пĕлтерекен сăмахсем хыççăн япаласен ĕçĕ-хĕлĕ çине куçаççĕ.

Япаласен ĕçне пĕлтерекен сăмахсемпе паллаштарма ӳкерчĕксем панă. Кашни ӳкерчĕкĕн айне япалан ĕçне сырса панă. Хĕрача чĕпĕсене çитерет. Кушак шăши тытать. Упа чупать. Кăвакал шывра ишет. Автан авăтать. Ача пулă тытать.

Учитель кашни ӳкерчĕкĕпе паллаштарать. Тĕслĕхрен, хĕрача мĕн тăвать?— тесе ачасене учитель ыйту парать.

Ачасем хĕрача чăхсене çитерет, тесе ответлеççĕ. Учитель хĕрача сăмаха пĕр йĕрпе, çитерет сăмаха аялтан икĕ йĕрпе туртать те ун çине мĕн тăвать? тесе çырса парать.

Çитерет сăмах ĕç тунине кăтартать тесе ăнлантарса хăварать.

Ытти ӳкерчĕксене те çак майпа пăхса тухаççĕ.

Çакан хыççăн учитель пĕтĕмлетсе хăварать.

Учитель япалан ĕçне кăтартма сĕтел çине ачасем вылямалли теттесем кăларса хурать: хăй тĕллĕн çӳрекен вылямалли автомашина, авăтакан автан, вĕрекен йытă.

Учитель автомашинăна сĕтел çине ярать те, лешĕ хăйех чупать.

Учитель: Ачасем, автомашина мĕн тăвать?

Вĕренекен: Автомашина чупать.

Учитель: Тĕрĕс. Сĕтел çинче автомашина чупать. Çапла, автомашина ĕç тунине куртăмăр.

Учитель: Автан мĕн тăвать? (Сĕтел çине янă вылямалли автан авăтма тытăнать.)

Вĕренекен: Автан авăтать.

Класра 146-мĕш хăнăхтарăва тăваççĕ. Тетрадь çине кам мĕн тунине çырса пĕтермелле. Текст айĕнче усă курмалли сăмахсем пур, анчах вĕсене çӳлти йĕркепе мар, пăтраштарса панă.

Пĕрремĕш сăмахне пĕрле тăваççĕ.

— Тухтăр мĕн тăвать?

— Тухтăр чирлисене сыватать.

Ачасем ыттисене хӑйсем ҫырса ответлеҫҫӗ.

Киле 149-мӗш хӑнӑхтарӑва парса яма юрать.

Япала ӗҫне кӑтартакан сӑмахсене кӗртсе предложенисене ҫырса пӗтермелле.

Ҫутҫанталӑк пулӑмӗ мӗн хыҫҫӑн мӗн пулнине йӗркелесе ҫырма 150-мӗш хӑнӑхтару кӗртнӗ, статйин ячӗ те ҫук, ӑна ят памалла. Малтан предложенисене класра вуласа тухаҫҫӗ те ятне параҫҫӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн япала ӗҫне кӑтартакан сӑмахсемпе паллашаҫҫӗ. Ыйтӑвӗсем: мӗн турӗ? мӗн тӑвать? мӗн тунӑ? Ҫак ыйтусене ответлесе ҫырма 151, 152-мӗш хӑнӑхтарусем пур.

Халиччен пӗр япала ӗҫне кӑтартакан хӑнӑхтарусем пулчӗҫ. Учитель пӗр япала ӗҫне кӑтартакан предложенисем илсе парать.

Пӗр япала пӗр ӗҫе тӑвать. Ача кӗнеке вулать. Ача пӗр вӑхӑтра пӗр ӗҫ тума ҫеҫ пултарать.

Нумай ача нумай ӗҫ тума пултарать. Ачасем кӗнеке вулаҫҫӗ. Япали те, ӗҫӗ те нумайлӑ хисепре. Ӗҫне кура ыйтӑвӗ. Пӗр ӗҫ ҫинчен мӗн тӑвать? мӗн турӗ? тесе ыйтмалла, нумай ӗҫ ҫинчен мӗн тӑваҫҫӗ? мӗн турӗҫ? тесе ыйтаҫҫӗ.

Кун вӑрӑмланать. Кун мӗн тӑвать?

Кунсем вӑрӑмланаҫҫӗ. Кунсем мӗн тӑваҫҫӗ?

Ача вылять. Ача мӗн тӑвать?

Ачасем выляҫҫӗ. Ачасем мӗн тӑваҫҫӗ?

Ачасем учебник тӑрӑх 155-мӗш хӑнӑхтарӑва тӑваҫҫӗ, глаголсене пӗрреллӗ е нумайлӑ хисепре лартса, тетрадь ҫине ҫырса илеҫҫӗ.

Хӑнӑхтарӑва ҫырнӑ чух япала ӗҫне кӑтартакан сӑмахсем патне кирлӗ ыйтусем лартаҫҫӗ.

Ыйтусем япалан ӗҫӗ пӗрреллӗ е нумайлӑ хисепре пулнине лайӑх кӑтартса параҫҫӗ.

Учебникра вӗреннине ҫирӗплетме тӗрлӗ хӑнӑхтарусем кӗртнӗ.

Предложенисене йӗркелеме япалана тата унӑн ӗҫне кӑтартакан сӑмахсем тӗп вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Япали предложени пуҫламӑшӗнче пулать, ун ӗҫне кӑтартакан сӑмахӗ предложени вӗҫӗнче тӑрать.

Учитель предложенири сӑмахсен йӗркипе паллаштарать те пӗлнине ҫирӗплетме 158-мӗш хӑнӑхтарӑва парать. Предложенири сӑмахсем хӑйсен вырӑнӗнче мар, ачасем вӗсене тӗрӗс йӗркелесе ҫырмалла.

## 16 §. ПРЕДЛОЖЕНИРИ САМАХСЕМ ХУШШИНЧИ ÇЫХАНАВА ПАЛАРТМА ВĔРЕНТЕССИ *(3 сехет).*

Предложенири сăмахсем пĕр-пĕринпе килĕшсе тăрса шухăшпа çыхăнаççĕ. Вĕсен хушшинчи çыхăнăва ыйтусем лартса пĕлеççĕ.

Япалана пĕлтерекен сăмахсемпе япалан ĕçне кăтартакан сăмахсем пĕр-пĕринпе килĕшсе тăрса çыхăнаççĕ.

Автан авăтать. Мĕн тăвать?
Автан авăтрĕ. Мĕн турĕ?

Илнĕ предложенисенче япали те, ĕçĕ те пĕрре. Кунта япалипе ĕçĕ килĕшсе тăрса çыхăннă. Вĕсем килĕшсе çыхăннине ыйтăвĕсемех кăтартса параççĕ.

Япала ячĕпе унăн ĕçне кăтартакан сăмахсем килĕшсе çыхăннине кăтартма 167-мĕш хăнăхтару илмелле. Япала ятне пĕлтерекен сăмахсем те, вĕсен ĕçне кăтартакан сăмахсем те пур — вĕсем кунта килĕшсе çыхăнаççĕ. Ачасен вал сăмахсем çине кирлĕ ыйтусем лартмалла.

Вĕреннине çирĕплетме ачасене хăйсене те тĕслĕхсем туптармалла, разбор тутармалла.

Пĕр сăмах тепĕр сăмахпа çыхăннине кăтартма 169-мĕшпе 170-мĕш хăнăхтарусем панă. Япалан ĕçне кăтартакан сăмах, хăй умĕн таракан япалана пĕлтерекен сăмахпа çыхăнса тăрать. Предложенири сăмахсен хушшинчи çыхăнăва ыйту лартса пĕлмелле.

Çак темăна вĕренсе çирĕплетме 172-мĕш хăнăхтару панă. Япала ĕçне кăтартакан сăмахсем тепĕр япалана пĕлтерекен сăмаха кирлĕ ыйтура лартаççĕ те улăштарса çыраççĕ.

Платник (пăчкă) татать. Платник мĕнпе татать? Пăчкăпа.

172—173-мĕш хăнăхтарусенче япалана пĕлтерекен сăмахсемпе япалан ĕçне кăтартакан сăмахсем пур, ытти сăмахсене ыйту лартса, хушса çырмалла, вĕсен хушшинчи çыхăнăва та кăтартса памалла.

Предложенири сăмахсем пĕр-пĕринпе тата шухăш тĕлĕшĕнчен çыхăнаççĕ. Шухăш тĕлĕшĕнчен çыхăннă чух япала паллине кăтартакан сăмахсем япала умĕнче тăраççĕ е ĕç паллине кăтартакан сăмахсем ĕçе кăтартакан сăмахсем умĕнче тăраççĕ те мĕнле? ыйтупа ыйтăнаççĕ.

Сарă чечек. Мĕнле чечек?
Хĕрлĕ ялав. Мĕнле ялав?

Лаша хытă чупать. Мĕнле чупать?

Машина хăвăрт çӳрет. Мĕнле çӳрет?

Вĕреннине çирĕплетме 170, 171-мĕш хăнăхтарусем пур.

«Сăмахсен çыхăнăвĕ» темăна çирĕплетме 177-мĕш хăнăхтарупа усă курмалла. Пур сăмахсене те виçĕ юпа туса уйрăм панă. Ачасем предложенири сăмахсем епле çыхăнса тăнине ăнланнă хыççăн вĕсене пĕрлештерсе предложени йĕркелеççĕ. Ыйтусем парса çыхăнтараççĕ.

Мĕн? Çуркунне. Çуркунне мĕн турĕ? Çитрĕ. Мĕнле çуркунне? Ырă çуркунне. Пурне пĕрлештерсен, çакăн пек предложени пулчĕ.

Ырă çуркунне çитрĕ.

Çак майпах ытти предложенисене пĕрлештереççĕ.

Симĕс вăрман ешерет. Ешĕл курăк чĕрĕлет. Сарă хĕвел çутатать. Чăпар куккук авăтать. Шурă пĕлĕт шăвать.

## 17 § ЯПАЛА ЯЧĔСЕНЕ, ЯПАЛАСЕН ПАЛЛИСЕНЕ, ĔÇĔСЕНЕ ПĔЛТЕРЕКЕН СĂМАХСЕНЕ ПĔР-ПЕРИНЧЕН УЙĂРМА ВĔРЕНТЕССИ (4 сехет).

1-мĕш класра чăваш чĕлхипе çĕнĕ темăсене вĕренесси вĕçленчĕ. Пĕтĕмĕшпе мĕн вĕреннине аса илесси пуçланчĕ. Анчах та аса илессине усăллă йĕркелемелле.

Вĕреннине аса илессине те çакăн пек йĕркелемелле: япалана пĕлтерекен сăмахсене аса илессине унăн паллисене кăтартакан сăмахсемпе танлаштарса кăтартмалла, вĕсен хушшинчи пĕрпеклĕхĕпе уйрăмлăхне асăрхама вĕрентмелле. Япалана пĕлтерекен сăмахсене ытти сăмах ушкăнĕнчен уйăрса илес тесен, вĕсен пĕлтерĕшĕ пуррине тата вĕсем кам? мĕн? ыйтупа ыйтăннине кăтартса хăвармалла.

Малалла япаласен уйрăмлăхĕ çинчен чарăнса тăмалла. Япала ĕçне кăтартакан сăмахсен уйрăмлăхне пăхса тухмалла.

Япала ĕçне кăтартакан сăмахсем мĕн тăвать, мĕн турĕ? мĕн тунă? ыйтăвĕсене аса илмелле. Япалан ĕçне, вал мĕн те пулин тунине кăтартнине, вĕсем улшăннине (эп çыратăп, ача çырать; эп çыртăм, ача çырчĕ) пĕр ĕçе тунине е нумай ĕçе тунине кăтартнине (ача çырать, ачасем çыраççĕ; ача çырчĕ, ачасем çырчĕç) ачасен ăстăнĕнче çирĕплетмелле.

Ачасене учебникри 183-мĕш хăнăхтарури ĕçе тутар-

малла. Нумай точка вырӑнне япалан паллине кӑтартакан сӑмахсем кӗртсе ҫырма хушмалла, кирлӗ сӑмахсемпе усӑ курма хӑнӑхтармалла.

Эвристикӑлла калаҫу мелӗпе учитель япалана пӗлтерекен сӑмахсемпе вӗсен паллисене, ӗҫӗсене кӑтартакан сӑмахсем хушшинчи уйрӑмлӑха уҫса памалла. Вӗренекенсем хӑнӑхтарӑва тунӑ май ӑнланса пыччӑр. Вӗреннине ҫирӗплетме 184-мӗш хӑнӑхтарӑва класрах тутарма юрать. Киле 185-мӗш хӑнӑхтарӑва парса ямалла.

Ку таранччен мӗн вӗреннине аса илме малтан предложенисем ҫинчен, предложенисем хыҫҫӑн точка лартмаллине, тепӗр предложение пысӑкран пуҫласа ҫырмаллине ачасене калаттармалла. Предложенисене тӗрлӗ сасӑпа каланине кура ун вӗҫӗнче точка, ыйту тата кӑшкӑру палли лартмаллине асӑрхаттармалла. Хӑнӑхтарусем парса хӑйсем тӗллӗн ӗҫлеме вӗрентмелле.

Ҫак майпа ытти темӑсене те аса илмелле. Аса илнӗ чух учителӗн карточкӑсемпе анлӑ усӑ курмалла, грамматика разборӗсем час-часах тумалла.

## ВУЛАВ УРОКӖСЕНЕ ИРТТЕРЕССИ.

Ҫснӗ программа, кашни вулав урокӗнчех ачасене пӗлӳпе воспитани парса, пур енлӗ аталантарса пырассине уҫҫӑнах палӑртса парать.

1-мӗш класри вулав урокӗсенче ачана илемлӗ те хӑвӑртрах вулама, кӗнекене—пӗлӳсен ҫӑлкуҫне—юратма хавхалантарса пымалла.

Ачасене ӑнланса, тӗрӗс, тикӗс, илемлӗ, кирлӗ хӑвӑртлӑхпа вулама вӗрентессине вулав урокӗсенче туса пымалла.

1-мӗш класра вӗренекен ачашӑн та вуланӑ текстӑн содержанине ҫеҫ ӑнланни сахал, текстӑн тӗп шухӑшне — мӗне пӗлтернине, мӗншӗн ун пек сӑмахсемпе каланине тавҫӑрса илме, кашни произведенири ырӑпа усала курма, уйӑрма вӗрентмелле.

1-мӗш класри вулав урокӗсенче ачасене лайӑх вулама вӗрентесси паллӑ вырӑн йышӑнать. Лайӑх вулама пӗлсен, ача вӗренӳре пур предметпа та аван ӗлкӗрсе пырать. Лайӑх вулакан ача текстри сӑмахсен пӗлтерӗшне пӗлет, кашни предложенин шухӑшне уйӑрать, текстӑн уйрӑм пайӗсене, содержанине ӑнланать, текст пӗтӗмӗшпе мӗн ҫинчен каланине, мӗнле шухӑша пӗлтернине калама

пĕлет, хăйне çав текст содержани, унти сăнар мĕншĕн кăмăла кайнипе е кайманнине калама пултарать пулсан,— **ăнланса вулани** пулать.

Вуласа пынă чух пĕр сăмах вырăнне çавна майлă теплĕр сăмах каламасăр, саспаллисене сиктерсе хăвармасăр, улăштармасăр, çĕнĕрен хутăштармасăр, саспаллисене, сыпăксене, сăмахсене пĕр хут çеç каласа, сăмахсене тĕрĕс ударенипе, орфоэпи нормипе пĕр кăлтăксăр вуланине **тĕрĕс вулани** теççĕ.

Текста туйăмпа, ударение, чарăну паллисене палăртса уççăн вулани **илемлĕ вулани** пулать.

Шкула пыриччен вулама пĕлмен пулсан, 1-мĕш класра вĕренекен ачан, вулама вĕренсе çитсен, минутра 18—20 сăмахран кая мар, вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче 35—45 сăмах вуламалла. Вара вăл **хăвăрт вулани** шутланать.

Текста ăнланса вуласси икĕ планпа пулса пымалла: 1) Мĕн çинчен çырнин содержанине ăнланасси; 2) Текстан тĕп шухăшне ăнланса илесси. Текста вуласа тухсан, малтан содержание ăнланма пулăшакан ыйтусем памалла: Кам çинчен е мĕн çинчен вуларăмăр? Вăл мĕн тăвать? т. ыт. те. Ачасен активлăхне ӳстерме пĕр-пĕрне содержани тăрăх ыйтусем пама вĕрентмелле, кашни ача ыйтусем пама хатĕрленни содержание тата лайăх ăнланма пулăшать. Содержание ăнлансан, текстăн тĕп шухăшне ăнланса илме, ыйтусем паратпăр: Мĕн тума? Мĕн пирки? Хăшĕ кăмăла кайрĕ? Мĕншĕн? т. ыт. те.

Урока хатĕрленнĕ чух учитель çĕнĕ текстра ачасем мĕнле сăмаха пуçласа илтеççĕ е ăна кирлĕ таран ăнланмаççĕ — пурне те шута илмелле, çав сăмахсене хăш вăхăтра ăнлантармаллине палăртмалла.

Текстри пĕр-пĕр сăмах ачасем ăна илтменнипе е пĕлтерĕшне пĕлменнипе содержанине ăнланма чăрмантарать пулсан, ăна вулама пуçличчен ăнлантармалла («Фермăра» сăвăра «медаль» сăмах, «Манăн пичче» сăвăра «пограничник» т. ыт. те).

Вулакан текстăн содержанине ăнланма чарман, е ăнланма йывăртарах сăмахсене вуланă чухнех каласа хăварма юрать. Хăшпĕр сăмахсене текст айне ăнлантарса çырнă, сăмахран «Пахча тăшманĕсем» статьяра «катемпи» самаха кăтартнă. Кун пек предложенири паллă тунă самаха вулаççĕ те ун хыççăн аялта çырса панине вуласа илеççĕ, вара предложение малалла вуласа каяççĕ. Аван вулама вĕреннĕ ача паллă тунă сăмах хыççăн чарăнса

гăрать, çав вăхăтра аялта ăнлантарнине ăшра кăна вуласа илет, унтан предложение малалла вуласа каять. Ачасем сахал ăнланакан, сахал усă куракан сăмахсемпе ытларах пĕр хут вуланă хыççăн ĕçлемелле. Сăмахсемпе ĕçленĕ чух çакна шута илмелле: ачасем пĕлмен сăмаха хăйсене тавçăрса илме хистемелле тата класра çав сăмаха кам та пулин пĕлет пулсан, малтан çав ачана калаттармалла, унтан учитель хушса каласа памалла.

Словарь ĕçне тĕрлĕ мелсемпе тума пулать: япалине е унăн модельне кăтартатпăр (вата — мамăк, пулемёт — модель, Кремль, Хĕрлĕ площадь — ӳкерчĕксемпе, фотопа, кино, схемăсемпе). Кун пек ĕç ытларах экскурсире, опыт тунă чух, предметлă уроксенче пулать.

Ăнланман сăмахсемпе ĕçленине илемлĕ сăмах майлашăвĕсемпе ĕçленипе пăтраштармалла мар. Илемлетекен сăмахсен пĕлтерĕшне текста разбор тунă чух уçса памалла, сăвăри предложенире вăл мĕне пĕлтерет, мĕншĕн автор ун пек каланине ăнлантармалла. Сăмахран «Хĕлле» сăвăра «Хура çĕре шуратать,

Мамăк сарнăн туйăнать...»

Юр мамăк пек шурă та çăмăл. Поэт çавăнпа та юра мамăкпа танлаштарать.

**Тĕрĕс вуласси.** Пĕрремĕш класри ачан вуланă чух ытларах çак çитменлĕхсем палăраççĕ: сăмаха, сыпăка, саспаллине улăштарса икĕ хут калаççĕ. Хăш ача саспаллине, сыпăка хăвăрт курса тавçăрса илеймест. Теприсем содержани тăрăх е малтанхи сыпăка вуласа илсе, малалла, вуламасăр калаççĕ. Ачасене, содержание ăнланса, саспаллисемпе сыпăксене лайăх пăхса, курса вулама хăнăхтармалла.

Вуланă чух пулакан йăнăшсене учителĕн тӳрлетмелле е ачасене тӳрлеттермелле. Шухăша тĕрĕс ăнланма чăрмантаракан йăнăша вулама чарсах тепĕр хут тĕрĕс вулаттармалла. Пĕчĕк йăнăша вуланă вăхăтрах, вулакан ачана чармасăр, учителĕн тӳрлетсе хăвармалла. Тĕрĕс вулама вĕрентме йăнăш тăвасран асăрхаттармалли ĕçсем те тума пулать: пĕр пек сыпăксем пур сăмахсене вулаттарасси, сăмахри сыпăксене сиктерсе хăварса çырнă сăмахсене вуласси. Кусемсĕр пуçне ушкăнпа тата рольпе вулани, драматизацилени тĕрĕс вулама вĕренме пулăшаççĕ.

Хăвăрт вулама вĕрентес шутпа та тĕрлĕрен ĕçсем ту-

ма пулать. Пĕр текстах темиçе хутчен вулаттармалла. Кашни хутĕнчех ачасене çĕнĕ ĕçсем парса пымалла. Ятарласахирттерекен ĕçсенчен çаксене кăтартма пулать: 1) доска çине çырнă предложенисене хăвăрт вуласа илеççĕ те, ăна хупласа хурсан, панă ыйтусем çине ответлеççĕ е мĕн вуланине каласа параççĕ; 2) ачасене пичетленĕ текст валеçсе памалла, кашни хăй текстне вуласа илет те ыйтусем çине ответлет, кайран текста вуласа парать; 3) панă текста хăвăрт вуласа тухаççĕ, панă ыйтусем çине ответ çырса, учителе параççĕ; 4) 20—25 йĕркерен тăракан абзац вулаттармалла, доска çинче çав абзацран илнĕ предложенисем пулмалла, доска çинчи предложенисене вуланă хыççăн ăна абзацра туптармалла; 5) доска çинче сăмахсене сиктерсе хăварнă текст çыртармалла, çав текстах кĕнекере вулаттарса, доска çинче çук сăмахсене туптармалла; 6) доска çинчи предложение — ыйтăва вуласа илсе, текстри предложенипе ответлемелле. Асăннă хăнăхтарусемпе урокра яланах ĕçлеме çук, ерипен вулакан ачасемпе уйрăммăн ĕçлемелле.

**Сасăпа тата ăшра вулани.** Икĕ тĕрлĕ вулама пулать: сасăпа тата ăшра. Нумай чухне сасăпа кама та пулин вуласа параççĕ. Сасăпа вулани содержанине лайăхрах ăнланса илме пулăшать. Сасăпа вуласан ача лайăх вулама вĕренет. Сасăпа вулани ачасене ушкăнпа ĕçлеме йĕркелет: пĕрин хыççăн тепри вуласа каять, рольпе, ушкăнпа (декламаци), хорпа вулаççĕ. Сасăпа вулани пĕр пек хăвăртлăхпа вулама хистет.

Пурнăçра сасăпа вуламалли ăшра вуламаллинчен сахал. Ăшра вулама хăнăхни мĕн вуланине ăнланма çăмăллатать. Ăшра вулама вĕреннин усси пысăк: хăвăрт вулама, вăхăта перекетлеме пулăшать. Ăшра вулама хăнăхтарас тесен, çак ĕçсене туса ирттермелле:

а) доска çине çырнă предложение е пĕчĕк текста ăшра вуламалла. Доска çине çырнă текста чаршавпа карсан, ачасен учитель панă ыйтусем çине ответлеме пĕлмелле; ă) доска çине çырса панă е валеçсе панă карточкăсем çине ĕç тума хушакан предложенисем çырмалла. «Доска патне тух», «Доска çине çыр», «Ручка илсе кил», «Форточкăна хуп», «Доскана тухса тасат» т. ыт. те ача ăшра вулать те мĕн хушнине тăвать; б) учебникра кăтартна текста е унăн пайне ăшра вулаттармалла, унтан содержанине калаттармалла; в) доска çине çырнă ыйтăва ачасем ăшра вуласа тухса, текстри предложенипе от-

ветлемелле; г) ăшра вуланă текстăн пайне ят пама пĕлмелле, д) диафильмпа ĕçленĕ чух кадр айĕнчи предложенисене ăшра вуласа, ун çинчен каласа памалла.

Эпидиаскоппа тĕрлĕрен текст е предложенисем ăшра вулаттарса, мĕн вуласа илнине каласа пама пĕлмелле.

Грамматика урокĕнче те, вулав урокĕнче те сасăпа вуланипе ăшра вулани ылмашăнса пымалла. Паллах, малтан сасăпа, пурте илтмелле вулама вĕрентмелле, унтан вара, ăшра вулама хăнăхтармалла. Вулав урокĕн тĕллевне пурнăçласа пыма 1-мĕш класра çак йĕркене ĕçлесе пыма пулать.

1. Вулас умĕнхи ĕç. Вуламалли текстăн содержанине анланма хатĕрлемелле. (Словарьпе ĕçлемелле, вуласа пĕлес шухăша вăйлатмалла, ачасем ун çинчен кутаранччен мĕн пелнине аса илмелле. Ку ĕçе тĕрлĕ майпа тума пулать: кинофильм кăтартма, экскурсие илсе кайма, картинăпа ĕçлеме, калаçу ирттерме.)

2. Текста пуçласа вуланă чух пĕтĕмĕшпе вуламалла. Пĕтĕмĕшле ăнланма мĕнле вуламаллине кăтартса памалла. Учителĕн текста çывăх каласа пама юрать, фонолитературăпа усă курма та пулать.

3. Содержани тăрăх кĕске калаçу ирттермелле (çакă ачасем содержанине мĕнле ăнланса юлнине пĕлме кирлĕ).

4. Уйрăм пайсене вуласа разбор тумалла.

(Сăнлăхпа сăнарсем, текстăн содержанине ыйтусемпе уçни, тупса вулани, иллюстрацисемпе ĕçлени.)

5. Пĕтĕм текста тепĕр хут вуламалла. Текстăн пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшне тепĕр хут аса илмелле.

6. Текст тăрăх план тумалла. План туни сăнлăхсемпе сăнарсен, тĕрлĕрен пулса иртнĕ ĕçсен хушшинчи çыхăнăва кăтартма, текстăн содержанине лайăх астума, нумай япаларан паллине уйăрса илме пулăшать. Плана картинăллă та, сăмахлă та тума пулать.

7. Текстăн содержанине калаттармалла. Ку вăл ача чĕлхине аталантарать, пуянлатать. Текста çывăх та, кĕскен те, пĕтĕмĕшле те, уйрăм пайсене те калаттарма пулать.

8. Пĕтĕмĕшле калаçу ирттермелле. Ку вăл произведенин тĕп шухăшне, пĕлтерĕшне уçма тата ăнланса илме кирлĕ. Текстри ĕçе хальхи пурнăçпа çыхăнтарма пĕлни ачасене воспитани парас ĕçре кирлĕ вырăн йышăнать.

9. Юлашкинчен текста илемлӗ вулаттармалла. (Пӗтӗмӗшпе те, пысӑк текст пулсан суйласа илнӗ вырӑнсене ҫеҫ вулаттарма та юрать.)

10. Рольпе вулаттармалла, инсценировка, драматизаци е урӑх творчествӑллӑ ӗҫсем тумалла.

Кашни вулав урокӗнчех пур ӗҫе те ҫак йӗркепе туса пымалла тесшӗн мар эпир. 45 минут хушшинче пур кӑтартнӑ ӗҫе те тума ҫук, урокра мӗн-мӗн тӑвасси урок тӗллевӗнчен, вуламалли текстран — унӑн содержанинчен, жанртан, пысӑкӑшӗнчен т. ыт. те килет. Кӑтартнӑ ӗҫсемпе мӗн чухлӗ вӑхӑт иртересси те асӑннӑ сӑлтавсенчен килет.

* * *

Сехетсем ҫине уйӑрнӑ чухне кашни вулав урокӗн темине кӑтартса панӑ. Вуламалли материала темӑпа пани, учителе вулав урокне усӑллӑрах ирттерме, лартнӑ тӗллеве лайӑхрах пурнӑҫлама пулӑшать. Урок темине анлӑрах ҫутатса парас тесе, пӗр урокра тӗрлӗрен ӗҫ тутарма пӑхнӑ. Ҫавӑнпа та учебникри калавсемпе сӑвӑсен шучӗ вулав урокӗсем валли уйӑрнӑ сехетсен шутӗнчен чылай нумайрах.

Опыт ҫакна кӑтартса парать: вӗренекенсем класра ӗҫленӗ текстпа килте тепӗр хут интересленсе ӗҫлесшӗн мар. Ҫавна шута илсе класра вуланине килте тепӗр хут вулама памалла мар.

Малтанхи уроксенче предложенисен тытӑмӗпе тата сӑмахсен составӗпе паллаштарма вулама ҫӑмӑл статьясемпе сӑвӑсем панӑ. Вӗренекенсем вӗсен содержанисене часах ӑнланса илме пултараҫҫӗ. Ку вара букварьпе «Тӑван сӑмах» кӗнекесем хушшинчи пысӑк уйрӑмлӑх пуласран хӑтарать. Вӗренекенсем час-часах сӑмахри саспаллисене улӑштарса йӑнӑш вулаҫҫӗ. Тӗрӗс вулама хӑнӑхса пыччӑр тесе, хӑшпӗр сӑмахсене саспаллисенчен пухса, сӑмахсем ҫине ударени ларттарса вулаттармалла. Уйрӑмах учитель е лайӑх вулакан вӗренекенсем вуланине, е вӗсем каласа панине итлеме хӑнӑхтармалла.

Пӗлӳ тата воспитани парас задачӑсем пӗр-перинпе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Вуламалли тата чӑваш чӗлхине вӗрентмелли материалсене панӑ чухне ачасене коммунизмла воспитани памаллине, Тӑван ҫӗршыва юратма, коммунизм тӑвас ӗҫе ӑнланма вӗрентсе пымаллине, ҫавӑнпа

пĕрлех вĕсене хăйсем пултарнă таран хăшпĕр ĕçсене хутшăнтарассине шута илнĕ. Çавăн пекех учебника ачасене йĕркеллĕ, тӳрĕ кăмăллă, сăпайлă, ĕçчен пулма вĕрентекен статьясем те кĕртнĕ. Çичĕ çул тултарнă ачасен ĕçĕ шкулта тăрăшса аван вĕренесси пулса тăрать. Учителĕн ачасене кашни кун çине тăрса вĕренсе пыма хăнăхтармалла. Çак ĕçре пирĕн аслă çулпуç В. И. Ленин шкулта вĕренни çинчен çырнă статьясене вулани пысăк усă парать.

Кĕнекере вулама тĕрлĕ литература произведенийĕсем панă: ĕçлĕ статьясем, илемлĕ калавсем, юмахсем, сăвăсем, ваттисен сăмахĕсем тата тупмалли юмахсем кĕртнĕ.

Ĕçлĕ статьясене вĕренекен ачасене пайăн-пайăн вулаттармалла, вуланă майăн калаçу ирттерсе тата хăйсене калаттарса, лайăхрах ăнлантармалла. Ачасем статьяри шухăша йĕркипе ăнланса пынипе кирлĕ пĕлӳ туянаççĕ. Кунта çакна асăрхамалла: текста кирек мĕнле пайласан та, уйрăм шухăша пĕлтерекен сыпăка пĕр пая кĕртмелле. Шухăша таткаласа пайлани вуланă чух текста ăнланма чăрмантарать.

Илемлĕ литература произведенийĕсене, юмахсене вара пĕтĕмĕшпе вуласа тухмалла, мĕншĕн тесен вĕсен тĕп шухăшĕ, илемлĕ сăнлăхĕсем вуласа тухсан çеç çителĕклĕ уçăлаççĕ. Çавăнпа та малтан вĕсене учителĕн вуласа памалла, тĕп шухăшне ăнланса илме пулăшмалла. Унтан çав калава е юмаха пайсем çине уйăрса вуламалла, юлашкинчен калав е юмах вĕçĕнче кăтартнă ĕçсене пурнăçламалла.

Çутçанталăк çинчен çырнă ĕçлĕ статьясене экскурсинче пулнă хыççăн вуламалла. Çав статьясене вуламалли уроксенче ачасен, хăйсем çутçанталăка, таврари пурнăça сăнанисемпе усă курса, пĕтĕмлетмелле.

Сăвăсене учителĕн яланах малтан хăй тĕрĕс, илемлĕ, кирлĕ пек чарăну паллисене палăртса вуласа памалла. Ачасем учитель мĕнле вуланине итлеççĕ, çавăн пек вулама тăрăшаççĕ. Учитель сăвва тĕрĕс, сасса улăштарса вулать пулсан, вĕренекенсем те çавăн пекех вулама вĕренеççĕ. Сăвăсем таврари пурнăça тĕрлĕ илемлĕ сăнлăхсемпе кăтартса параççĕ. Ачасене çав сăнлăхсене тупса кăтартма, вĕсемпе усă курма вĕрентмелле.

Ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсене уйрăм уроксенче вуламалла мар. Вĕсене илемлĕ литература

произведенийĕсен, ĕçлĕ статьясен, сăвăсен содержанийĕсемпе çыхăнтарса вĕрентмелле.

Ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсем темăсен содержанине анлăлатаççĕ, пуянлатаççĕ.

Вĕренекенсене кĕнекепе харпăр хăй тĕллĕн ĕçлеме хăнăхтарас тĕллевпе виççĕмĕш чĕрĕкрен пуçласа эрнере пĕрре класс тулашĕнчи вулав урокĕсене ирттермелле.

**Вулав урокĕн темисем.**

«Тăван сăмах» кĕнекере пурĕ вуникĕ тема. Кашни темăна сехетсем çине уйăрса кăтартса панă.

1-мĕш тема. «Октябрĕноксем» *(4 сехет).*

Ку темăна вуланă вăхăталла пĕрремĕш класра вĕренекенсем пурте октябрĕноксен çăлтăрĕнче тăраççĕ, кăкăр çине çăлтăр çакса çӳреççĕ, хăйсем ĕçлеме пултаракан тĕрлĕ ĕçсене хутшăнаççĕ. Ачасем вулав урокĕсенче октябрĕноксен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен пĕлӳ илеççĕ, малалла ăна анлăлатса пыраççĕ.

Уроксенче ăнланса, тĕрĕс, илемлĕ вуланипе пĕрлех вĕренекенсене текстпа ĕçлеме вĕрентмелле, кĕнекере вуласа пĕлнипе пурнăçра усă курма хăнăхтармалла.

Текста вуланă чух çакăн пек ĕçсем туса ирттермелле: панă ыйтусем çине тĕрĕс ответлеме, хăйсем сăнанине каласа пама, текст валли мĕнле ӳкерчĕк тума май пуррине каласа кăтартма, учитель лартнă ыйтусем тăрăх вуланă материалăн содержанине çыхăнуллă каласа пама, текстра кирлĕ сăмаха е предложение тупма вĕрентмелле.

«Октябрĕноксем» темăра октябрĕноксен правилисене тата вĕсен символики çинчен çырнă калавсемпе сăвăсене панă. Темăна вуласа пĕтернĕ тĕле вĕренекенсем октябрĕноксен пилĕк правилине пăхмасăр калама пĕлмелле. Ачасене октябрĕноксен правилисене пурнăçласа пыма куллен хăнăхтарса пымалла.

**Класс тулашĕнче тумалли ĕçсем.**

Класра октябрĕноксен кĕтессине йĕркеленĕ хыççăн вĕренекенсен килте çавăн пек кĕтессем хатĕрлемелле. Унта кĕнекесене усрамалли çӳлĕк, хăйсене тирпейлĕ тытма пулăшакан япаласем (йĕп, çип т. ыт. те), вĕренмелли хатĕрсем, хăйсем тунă япаласем (модельсем) пулччăр;

Октябрёноксен пурнăçĕ çинчен калакан диафильмсем кăтартмалла;

Класс библиотекн тумалла;

«Букварьпе сывпуллашни», «Тăван сăмах» кĕнекепе тĕл пулни» темăпа утренник ирттермелле.

Ку утреннике ирттернĕ чух Петĕр Ялкирăн «Тавтапуç, Букварь» инсценировкипе усă курма май пур. Ăна 1966 çулта тухнă «Юратнă кĕнекен» 107-мĕш страницинче тупма пулать.

Радио тăрăх пионерсемпе октябрёноксем валли паракан передачăсене итлеме вĕрентмелле.

**Темăри материала сехетсем çине уйăрни.**

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 1. | Октябрёноксем. | «Октябрёноксем» сăвă.<br>О. Бедарев. Октябрёнок. |
| 2. | Октябрёноксем — ĕçчен ачасем. | О. Бедарев. Пĕчĕк пулăшакан. |
| 3. | Октябрёноксем аслисене пулăшаççĕ. | А. Галкин. Пысăк ĕмĕт.<br>В. Давыдов-Анатри. Кĕтерук. |
| 4. | Октябрёноксем сынсемшĕн тăрăшаççĕ. | В.Осеева. Карчăк. |

2-мĕш тема. «Хĕлле» *(5 сехет).*

«Хĕлле» темăпа ĕçлессине экскурси ирттернипе пуçласа ямалла. Вĕренекенсем хĕллехи çанталăк, юр, пăр çинчен мĕн пĕлнине пĕтĕмлетмелле. Унтан çĕнĕ пĕлӳ памалла. Хĕл юр çунинчен пуçланнине, çанталăк сивĕтнине тата чĕрчунсем хĕл каçма хатĕрленнине ăнлантарса памалла.

В. Одоевскин «Хĕл мучи патĕнче хăнара» юмахне вуланă хыççăн вĕренекенсен юр хăй ăшăтманни, анчах çĕр ăшшине хăй хупласа тăнипе упранине, çавна пула йывăççен, ӳсентăрансен тата тырпулсен тымарĕсем шăнманнине ăнлантарса памалла.

Чылай статьясен шухăшĕ пĕтĕмпе вуласа пĕтерсен тин уçăлать. Çавăнпа та малтанхи хут учитель вуланă чухне статьяна, калава е юмаха пĕтĕмпе вуласа тухмалла. Ăнланса юлнине пĕлме учителĕн икĕ-виçĕ ыйту

памалла. Ун хыççăн статьяна пайăн вулама тытăнмалла.

Пĕрремĕш класра вĕренекенсене пирĕн патăмăрта хĕл каçма юлнă кайăксен пурнăçне сăнама вĕрентмелле. Вĕсем мĕнле пурăннине, мĕн çинине, ăçта çĕр каçнине сăначчăр. Вĕçен кайăксене пирĕн патăмăртан хĕл сивви мар, выçă вилесрен хăрани хăвалать. Вĕçен кайăксене сивĕрен тĕкпе мамăк хӳтĕлет. Кунта юлнă кайăксем те шартлама сивĕсем вăхăтĕнче апат-çимĕççĕр лараççĕ. Вĕренекенсене вĕçен кайăксен хĕллехи пурнăçне çăмăллатма апат памалли çӳлĕксем (кормушкăсем) тума вĕрентмелле.

«Хĕлле» темăпа статьясемпе сăвăсене вуланă вăхăтра Çĕнĕ çул ёлкине хатĕрлентермелле. Ку ĕçе класс тулашĕнче тумалла.

**Темăри материала сехетсем çине уйăрни.**

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 1. | Экскурси.<br>Ӳсентăрансем хĕлле. | В. Одоевский. Хĕл Мучи патĕнче хăнара. |
| 2. | Предметлă урок. | Пăр тата юр. |
| 3. | Ача-пăчасен хĕллехи вăййисем. | «Тăвайкки» статья. |
| | Пăхмасăр калама вĕренесси. | А. Çулĕç. Конькипе. |
| 4. | Чĕрчунсем хĕлле. | Г. Скребицкипе В. Чаплина. Чӳречерен пăхăрха.<br>Хумма Çеменĕ. Хĕллехи каç. |
| | Картинăсем тăрăх ĕçлесси. | Апат пани. В. Давыдов-Анатри. Хĕлле. |
| 5. | Çĕнĕ çул ёлкине хатĕрленесси. | И. Малкай. Ёлкăра. |

3-мĕш тема. «Çемье» *(5 сехет).*

«Октябрёноксем» темăна вĕреннĕ чухне ачасем класс коллективĕпе октябрёноксен ырă ĕçĕсем çинчен вуларĕç. «Çемье» темăра туслă çемье çинчен, çынсем пĕр-пĕрне

хисеплени, пулăшса пыни, аслисен ĕçĕсем çинчен çырнă статьясемпе сăвăсене вулаççĕ. Ачасем шкулта мĕнле пулмаллине пĕлеççĕ, халĕ ĕнтĕ кашни çын çĕршывăн ырлăх-пурлăхне ӳстерсе пырассишĕн тăрăшса ĕçленине курса, хăйĕн те çавăн пек пархатарлă ĕçе хутшăнмаллине туйса илеççĕ.

Ку темăпа ирттерекен уроксенче илемлĕ вулама тата текстпа ĕçлеме малалла вĕрентмелле. Вĕренекенсене план тума тата каласа пама, калавăн е сăввăн тĕп шухăшне тупса пама, унти геройăн ĕçĕ-хĕлĕпе шухăш-кăмăлĕ çинчен каласа пама хăнăхтарса пымалла.

Ку темăри Ульяновсен çемйи çинчен çырнă калавсене вуланă чух вĕренекенсене çемьере мĕнле пулмаллине, хăйсене епле тытмаллине вĕрентме пулать. Ульяновсен туслă çемйи пуриншĕн те тĕслĕх пулса тăмалла. Çак шухăша кашни ача патне çитермелле. Вăл учителĕн тĕп задачи. Çак темăпа Г. Ефимовăн «Аннене хăратса ӳкерер мар» калавпа урока мĕнле ирттермеллин тĕслĕхне 49-мĕш страницăра кăтартса паратпăр.

«Çемье» темăри материала вуланă вăхăтра ачасене çемьере хăйсене хăйсем йĕркеллĕ тытма, пĕр-пĕрне хисеплеме, ашшĕ-амăшĕсене юратма, вĕсем хушнине итлеме вĕрентмелле.

Класс тулашĕнче «Эпĕ килте мĕн тăватăп» темăпа утренник ирттермелле. Унта октябрĕноксен ĕçĕ кама кирли çинчен калаçу ирттермелле. Аслисен ĕçĕсем çинчен çырнă калавсемпе сăвăсене вуламалла, диафильмсем пăхмалла.

Вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе ачасен килти ĕçĕсем çинчен калаçу ирттермелле.

**Темăри материала сехетсем çине уйăрни.**

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 1. | Анне. | Л. Толстой. Пуринчен те лайăххи.<br>А. Эсхел. Анне. |
| 2. | Çемьери туслăх. | Г. Ефимов. Аннене хăратса ӳкерер мар. |

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
| --- | --- | --- |
| 3. | Телейлĕ ачалăх. | П. Хусанкай. Сăпка юрри.<br>Е. Афанасьев. Ҫентти укерет. |
| 4. | Аслисен ĕҫĕсем. Ҫемьери ҫынсен сăпайлăхĕ. | В. Алентей. Сăпка юрри.<br>В. Прохоров. Тав. |
| 5. | Ача-пăча ĕҫе хутшăнни. | В. Прохоров. Шăллăм.<br>В. Давыдов-Анатри. Пулăшатăп аттене. |

4-мĕш тема. «Лайăх тени мĕн тени, япăх тени мĕн тени» *(6 сехет)*.

Малтанхи темăсене вĕреннĕ чухне вĕренекенсем ҫынсен ырă енĕсем ҫинчен вуларĕҫ. Ҫынсем пĕр-пĕрне пулăшни, тăрăшса ĕҫлени, чăн-чăн юлташсем мĕнле пулни вĕсемшĕн тĕслĕх пулса пычĕ. Ку темăна вуланă чухне ачасен умне лайăх енсемпе пĕрлех ăна хирĕҫле енсем тухса тăраҫҫĕ. Вĕренекенсене хăйсене вывод тума хăнăхтарса пымалла. Ыррине усаллинчен, лайăххине япăххинчен уйăрма вĕрентмелле.

Вĕренекенсем ҫынсен лайăх енĕсене: тӳрĕ кăмăллă, хăюллă, ĕҫе юратакан, хăйсене пысăка хуманни пулнине тата ҫынсен япăх енĕсене: ӳркенекен, ҫăткăн, хăравҫă, мухтанчăк пулнине пĕлмелле.

Ырăпа усала танлаштарса пăхса пĕлеҫҫĕ. Калавсенчи ырă тĕслĕхсемпе япăх тĕслĕхсене учителĕн вĕренекенсене танлаштарса пăхма вĕрентмелле. Танлаштару формисемпе усă курнă чухне литературăри геройсене вĕренекенсемпе танлаштарма юрамасть. Ун пек туни сиенлĕ. Вĕренекен ăнланса ҫитмен пирки тунă ĕҫ, унăн шухăшне, кăмăлне хирĕҫле ĕҫ пулса тăма пултарать.

Ку темăпа вулама панă материалсем пĕтĕм содержанине каласа пама, рольсем тăрăх вулама вĕрентме аван. (Тĕслĕхрен, В. Прохоровăн «Ҫая юлсан, каю шăтать», В. Осеевăн «Виҫĕ юлташ», Юхма Мишшин «Ҫыру урокĕнче» калавĕсем).

**Темăри материала сехетсем çине уйăрни.**

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 1. | Ачасем ĕçре пулăшни. | Эпĕ те колхозра ĕçлетĕп. А. Галкин. Ĕçчен Куçук. М. Уйăп. Туссем. |
| 2. | Лайăх тени мĕн тени, япăххи мĕскер вăл. | В. Давыдов-Анатри. Ирăпа Иван. |
| 3. | Ĕçе вăхăтра тумалла. | В. Прохоров. Кая юлсан, каю шăтать. |
| 4. | Чăн-чăн юлташ. | В. Осеева. Виçĕ юлташ. |
| 5. | Ушкăнпа выляма та, ĕçлеме те аван. | И. Яковлев. Эпĕ ӳкĕнни. |
| 6. | Пĕр-пĕрне пулăшни — ырă ĕç. | Юхма Мишши. Çыру урокĕнче. |

5-мĕш тема. «Юмахсем» *(6 сехет).*

Юмахсене вуланă чухне вулава аталантарма çакăн пек ĕçсене туса ирттерме пулать: а) учитель хушнă тăрăх ăшра вуласси; ыйтусем çине текстран ответсене тупса вуласси;

б) юмаха темиçен умлă-хыçлă вуласси;

в) шухăш вĕçленнĕ майăн пайсем çине уйăрса вуласси.

Юмахсене вуласа тухнă хыççăн вĕренекенсене план тăрăх текста çывăх каласа пама вĕрентмелле. Вĕренекенсем урăх çын сăмахĕсемпе усă кураççĕ пулсан, чарма юрамасть, урăх çын сăмахĕсемпе каласа вĕсем юмаха илемлетеççĕ.

Нумай ачасем шкула çӳреме пуçличченех юмахсемпе интересленеççĕ. Аслисем каласа е вуласа пани тăрăх чылай юмахсем пĕлеççĕ. Çав юмахсене вĕренекенсене калаттармалла. Вулав урокĕсенче пĕчĕк викторинăсем ирттермелле. Тĕслĕх:

1. Мĕнле юмахра «Пурнăç хытти—çăкăр çемçи» ваттисен сăмахне асăннă?

2. Чее тилĕ те инкеке лекнĕ юмах ятне кала.

3. Кам: «Акă вăл! Акă вăл! Тыт! Тыт! Акă вăл! Ай, ай-ай! Тыт!»—тесе кăшкăрать. Çав юмах ятне кала.

«Юмахсем» темăри «Виçĕ упа» юмаха вуламалли урокăн тĕслĕхне 52-мĕш страницăра паратпăр.

«Виçĕ упа» юмаха вулассине методика вĕрентнĕ пек ирттерме 1 сехет çитмесен, учителĕн çав юмахпа ĕçлеме 2 сехет уйăрмалла. Программăра кăтартнă сехетсен шутне пăсас мар тесен, хăшпĕр юмахсене килте вулама парса ямалла. «Юлхав сăлтавне тупать», «Қашкăрпа карчăк» юмахсене вĕренекенсем килте вуласа тухса, тепĕр кунне урокра каласа пама пултараççĕ.

**Темăри материала сехетсем çине уйăрни.**

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 1. | Чĕрчунсем çинчен çырнă юмахсене вуласси. | Виçĕ упа. |
| 2. | Ĕçчен пулни, япалана тирпейлĕ те перекетлĕ тытма пĕлни — аван, юлхав та ĕмĕтсĕр пулни—япăх. | Пакшапа Чакак. |
| 3. | Пĕрлешӳллĕ ĕç — пуянлăх кӳрет. | Лартмасăр юлнă йăран. |
| 4. | Çăткăнлăх пĕтерет. | Çăткăн Пак. |
| 5. | Ĕмĕтсĕрленни ырă тумасть. | Путенепе Тилĕ.<br>И. Яковлев. Қашкăрпа карчăк. |

6-мĕш тема «Пирĕн тăван çар» *(4 сехет).*

Кĕçĕн çулхи ачасемпе Совет Çарĕ çинчен çырнă калавсемпе сăвăсене вулани вĕренекенсене пĕчĕклех совет патриотизмĕн туйăмне аталантарма пулăшать. Ку темăна вĕреннĕ вăхăтра вĕренекенсене учителĕн Совет Çарĕ Тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхлани çинчен, унăн нумай тăшмансемпе çапăçма тивни çинчен ăнлантарса памалла.

«Манăн пичче» сăвва вуласа, вĕренекенсем мирлĕ вăхăтра та яланах сыхă пулмалли, Тăван çĕршыва тăшмансенчен çирĕп сыхлама кирли çинчен пĕлеççĕ. Кĕçĕн çулхи ачасем Совет Çарĕпе питĕ интересленеççĕ. Хăшпĕр ыйтусене вĕсем тĕрĕс ăнланмасăрах астуса юлаççĕ. Учителĕн вулав урокĕсенче призведенин тĕп шухăшне, унăн идейине тĕрĕс уçса памалла. «Манăн пичче» сăвва вулассипе ирттермелли урокăн тĕслĕхне 54-мĕш страницăра паратпăр.

«Паттăр салтак» калава вуласа, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче совет çыннисем хаяр çапăçура паттăр пулнине, вĕсем хăйсен пурнăçне те шеллеменнине пĕлеççĕ.

Совет Çарĕ çинчен литература произведенийĕсемпе паллашнă чухне вулавпа пур тĕрлĕ ĕçсене туса ирттермелле. Текстпа ĕçлессине анлăлатмалла. Вĕренекенсене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме хăнăхтарса пымалла. Кашни вулав урокĕ умĕн вĕренекенсем умне тĕп ыйту лартмалла. Урок вĕçленнĕ çĕре вĕренекенсене кĕнекере ыйту çине ответ тупса пама хăнăхтармалла, вăл тĕрĕссипе тĕрĕс маррине учителĕн уçса памалла.

Темăна вĕренсе пĕтернĕ çĕре, вĕренекенсен çак ыйтусем çине тĕрĕс ответ пама пĕлмелле:

1. Совет Çарĕн кунне хăçан паллă тăваççĕ?

2. Мирлĕ вăхăтра совет салтакĕсемпе офицерĕсем мĕн тăваççĕ?

3. Мĕншĕн пирĕн çара Совет Çарĕ теççĕ?

4. 1941 çулта пирĕн çĕршыва фашистсем тапăнса кĕрсе мĕн тума шутланă?

5. Пирĕн салтаксем фронтра мĕнле çапăçнă?

6. Совет çыннисем Çĕнтерӳ кунне хăçан паллă тăваççĕ?

Пĕтĕм ĕçе мухтавлă Совет Çарне хисеплеме тата юратма вĕрентес тĕллевпе туса ирттермелле.

Совет Çарĕн **кунне уявлама ирттерекен** утренникре Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пулнă салтакпа е Совет Çарĕн салтакĕпе тĕлпулу ирттермелле. Вĕренекенсене Совет Çарĕн кунĕ ячĕпе саламлă çыру çырма вĕрентмелле.

**Темăри материала сехетсем ҫине уйăрни.**

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 1. | Совет Ҫарĕ пирĕн ҫĕршыва сыхлани. | А. Артемьев. «Манăн пичче», «Совет Ҫарĕ» статья. |
| 2. | Совет салтакĕсем — пире хӳтĕлекенсем. | А. Гайдар «Похода» е Л. Воронкова. «Йытă — санитар». |
| 3. | Фашистсем пирĕн ҫершыва тытса илме шутлани. | М. Румянцев. Паттăр салтак. |
| 4. | Мирлĕ вăхăтра Тăван ҫĕршыва тăшмансенчен сыхлани. | В. Алентей. Ашă салам. Чапаев. |

7-мĕш тема. «Мартăн 8-мĕшĕ — хĕрарăмсен уявĕ» *(3 сехет).*

Ку темăпа ĕҫленĕ май шкул ачисем пирĕн ҫĕршыври хĕрарăмсен пурнăҫĕпе ĕҫĕ-хĕлĕ ҫинчен ăнланса илеҫҫĕ. Анне те атте пекех килйыш тĕрĕс тĕкел пултăр тесе тăрăшать, ачасене вĕрентсе, Тăван ҫĕршыва юрăхлă ҫынсем туса ӳстерессишĕн вăй-халне шеллемест, ырми-канми ĕҫлет, чĕререн тăрăшать. Пирĕн аннесем килте ҫеҫ мар, халăх хуҫалăхĕнче те хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕҫлеҫҫĕ. С. Баруздин «Анне ĕҫĕ» калаври хĕрача хăйĕн амăшĕ ĕҫлекен фабрикăра пулни ҫинчен ҫырса кăтартать. Хĕрача амăшĕн ĕҫĕпе паллашать, унта лайăх ĕҫлекен работницăсем ҫинчен пĕлет. Хăй те ӳссе ҫитсен, амăшĕ пекех, аван ĕҫлеме ĕмĕтленет.

«Хурҫă ут хуҫи» калава вуласа, вĕренекенсем хĕрарăмсем ялхуҫалăхĕнчи йывăр ĕҫсене те пурнăҫлама пултарнине пĕлеҫҫĕ. Хĕрарăмсем те арҫынсемпе танах тĕрлĕ машинăсемпе ĕҫлеме пултараҫҫĕ. Ҫине тăрса, тăрăшса ĕҫленине пула, Василиса Павловна Кузнецова паллă трактористка пулса тăнă.

Темăри калавсене вуласа, вĕренекенсен амăшĕсене юратма, хĕрарăмсен ĕҫне хисеплеме вĕренмелле. Аннесен ĕҫне ҫăмăллатас тесен, вăл хушнă ĕҫе вăхăтра тата тĕплĕ пурнăҫласа пымалла.

Хĕрарăмсен уявĕ ячĕпе «Пирĕн анне» монтаж хатĕр-

лемелле, коммунизмла ĕç ударникĕ пулнă хĕрарăмпа тĕл-пулу ирттермелле, аннесене, асаннесене, аппасене валли уяв ячĕпе парнесем хатĕрлемелле, çырусем çырмалла.

**Темăри материала сехетсем çине уйăрни.**

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 1. | Аннесен уявĕ. | В. Прохоров. Парне. |
| 2. | Амăшĕпе ачисем. | А. Çулĕç. Қам пире юратать. «Манăн анне» статья. |
| 3. | Аннесен ĕçĕсем. | В. Иванова. Хурçă ут хуçи. С. Баруздин. Анне ĕçĕ. |

8-мĕш тема. «Пирĕн Тăван çĕршыв — Совет Союзĕ» *(5 сехет).*

«Пирĕн Тăван çĕршыв—Совет Союзĕ» темăпа калавсемпе сăвăсене вуласа вĕренекенсем хăйсем тăван çĕршыв çинчен пĕлнине пĕтĕмлетеççĕ. Çĕршывăн çыннисем ĕçре пĕр-пĕрне пулăшса пыни çинчен çĕнĕ пĕлӳ илеççĕ. Ку темăна вĕреннĕ чухне вĕренекенсене Тăван çĕршывăн ячĕпе паллаштармалла, унăн чапĕпе мухтавне уçса памалла.

Вулама панă калавсемпе сăвăсенче пирĕн çĕршывăн илемлĕ çутçанталăкне, Тăван çĕршывăн хулисемпе ялĕсене, фабрикăсемпе заводсене, колхозсемпе совхозсене тата унта ĕçлесе пурăнакан совет çыннисене сăнласа панă. Темăри В. Давыдов-Анатрин «Çул уçрĕ Гагарин» сăввине вуласа, вĕренекенсем 1961 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнче Совет Союзĕн çынни Юрий Гагарин чи малтан тĕнче уçлăхне ракетăпа вĕçсе кайни çинчен пĕлеççĕ. Чаплă çĕнтерӳ!

Темăри калавсемпе сăвăсене вулаттарса вĕренекенсене Тăван çĕршыва юратма, унăн илемлĕхне курма, Тăван çĕршыв çыннисен ĕçне хисеплеме вĕрентмелле. Хăйсене те вăй çитнĕ таран Тăван çĕршывшăн усăллă ĕçсем тума хăнăхтармалла.

Темăри калавсемпе сăвăсене вуласа пĕтернĕ çĕре вĕренекенсен хăйсем çуралнă вырăнăн ятне (хула, ял, по-

сёлок, область), ашшĕ-амăшĕсем ĕçлекен учреждени, завод, фабрика, колхоз е совхоз ятне, аслисем мĕнле ĕçре ĕçленине каласа кăтартма пĕлмелле.

Ачасен çак ыйтусем çине тĕрĕс ответ памалла:

1. Пирĕн çĕршыв мĕн ятлă?

2. Мĕншĕн ăна Совет Союзĕ теççĕ?

3. Совет влаçĕ вăхăтĕнче ялта (хулара) мĕнле улшăнусем пулнă?

Темăн тĕллевĕ вулава малалла аталантарасси пулать. Вĕренекенсене чылай хăвăрт, сăмахсене тĕрĕс каласа вулама хăнăхтарассине малалла туса пымалла. Вĕренекенсен калаçăвне йĕркелесе пымалла: шухăша ăнланмалла, сăмахсене пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнтарса каласа пама вĕрентмелле, çĕнĕ сăмахсемпе паллашса пымалла.

**Темăри материала сехетсем çине уйăрни.**

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 1. | Тăван çĕршыв. | П. Ялкир. Тăван çĕршыв. Г. Краснов. Кремль çăлтăрĕ. |
| 2. | Ĕлĕкхипе хальхи. | М. Ильин. Тĕлĕнмелле чаплă япаласем çинчен. «Завод» статья. |
| 3. | Совет çыннисен заводри ĕçĕсем. | Е. Афанасьев. Атăл çинче. |
| 4. | Совет çыннисен колхозри ĕçĕсем. | «Пирĕн колхоз» статья. П. Ялкир. Тăван хирте. Н. Сандров. Çĕршывăм, саван! |
| 5. | Совет наукин çитĕнĕвĕ. | В. Давыдов-Анатри. Çул уçрĕ Гагарин. |

9-мĕш тема. «Çуркунне» *(7 сехет)*.

Ку темăна вĕрентнĕ чухне ачасене çутçанталăкăн илемне курма, ун илемлĕхне туйса илме вĕрентмелле. Калавсене илемлĕ вулама хăнăхтарас ĕçе малалла туса пымалла. Сăвăсене вуланă чух логика ударенине тĕрĕс туса вулаттарма хăнăхтармалла.

Калавсемпе сăвăсене вуланипе пĕр вăхăтрах вĕренекенсен тĕрлĕ сăнавсем тума пĕлмелле. Вулама тата ачасен сăнавĕсене шута илсе пыма темăри материала виçĕ пая пайламалла: çуркунне пуçланни, юр ирĕлсе пĕтни, çурхи ĕçсем.

«Çуркунне» темăри сюжетлă калавсем вĕренекенсене пĕтĕм содержанине каласа пама вĕрентме питĕ аван. Ун пек калавсене вĕренекенсем малтан пуçласа вĕçне çитиччен пĕтĕм кăмăлтан каласа параççĕ. (Тĕслĕхрен, В. Бианки çырнă «Вăрмана шыв илни» калав).

Калава пайлассине малалла тумалла, мĕн хыççăн мĕн пулнине тата пайсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнса тăнине кăтартса пама вĕрентмелле.

Тĕслĕхрен «Пăр кайни» калава виçĕ пая пайлама пулать: пăр тапранни, пăр кайни, инкекрен хăтăлни.

Хăшпĕр калавсене вуланă чухне вĕренекенсене ĕçе хăнăхтарас тĕлĕшпе ĕçлемелле. Кун пек калавсен шутне «Тирек» калава кĕртме пулать. Урока мĕнле irттермелли тĕслĕхе 57-мĕш стр. кăтартса паратпăр.

**Темăри материала сехетсем çине уйăрни.**

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 1. | Çуркунне çитни. Унăн паллисем. | К. Иванов. Çуркунне çитсен. |
| 2. | Вĕçен кайăксем вĕçсе килни. | «Вĕçен кайăксем килни» статья. Н. Шелепи. Шăнкăрч. Г. Харлампьев. Чĕкеçсем. |
| 3. | Юр ирĕлсе шыв пулни. | А. Чехов. Çурхи кун. В. Бианки. Вăрмана шыв илни. |
| 4. | Пăр кайни. | «Пăр кайни» калав. И. Малкай. Пăр кайни. |
| 5. | Колхозри çурхи ĕçсем. | И. Соколов-Микитов. Хирсенче. |
| 6. | Йывăçсем лартни. | П. Ялкир. Сад. «Тирек» калав. Н. Шелепи. Панулми чечекĕ. |

| Уроксен йěрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 7. | Космонавтсен кунě. Çурхи ăшă çанталăкра хурт-кăпшанкăсем чěрěлни. | А. Ķăлкан. Мухтанатпăр. Ķ. Ушинский. Пыл хурчěсем апат шырама тухни. Н. Шелепи. Пыл хурчěсен юрри. |

10-мěш тема. «Апрелěн 22-мěшě — В. И. Ленин çуралнă кун» *(4 сехет)*.

Вěренекенсем шкула çӳреме пуçличченех В. И. Ленин çинчен илтеççě. Вулама вěреннě тапхăрта та вěсем В. И. Ленин çинчен вуланă. (П. Николаев «Букварь», 1969 çул, 83 стр.). «Тăван сăмах» урокěсенче вěренекенсене «Букварьтен» вуласа пěлни çумне, Ленин çинчен тата анлăрах ăнлантармалла. Тăван чěлхе урокěсенче вěренекенсем В. И. Ленин пурнăçěнчен илнě калавсемпе сăвăсене вулаççě, Ленин ěçхалăхěн çулпуçě, аслă вěрентекенě, çывăх тусě пулнине, ěççыннисен пурнăçне çăмăллатма тăрăшнине пěлеççě.

Темăри калавсемпе сăвăсене вуланă май учителěн вěренекенсене çак ыйтусем çине тěрěс ответ пама пулăшмалла: В. И. Ленин ăçта çуралнă? Хăçан В. И. Ленин çуралнă куна паллă тăваççě? В. И. Ленин камсене хирěç кěрешнě? Мěншěн В. И. Ленина ěçхалăхěн çулпуçě, аслă вěрентекенě теççě?

В. И. Ленин çинчен çырнă калавсемпе сăвăсене вуланă чухне вěренекенсем пěлмен сăмахсем чылай тěл пулаççě. Çав сăмахсене вěренекенсене ăнлантарма словарь ěçне тимлě туса пымалла. Çěнě сăмахсемпе предложенисем туса калаттармалла. Çав предложенисене туса калань чухне вěренекенсем кěнекери текстпа та усă курма пултараççě.

Вěренекенсем ăнланман сăмахсен шутне çаксене кěртме пулать: çулпуç, революционер, коммунист, рабочи, хресчен, ěççыннисем; патша, çěр улпучě, капиталист, пусмăрçă, полици, ют çěршыв.

Класс тулашěнче çак ěçсене тумалла.

Шкулта В. И. Ленин кĕтесне йĕркелемелле, утренник ирттермелле, В. И. Ленин çинчен çырнă кĕнекесене пухса пĕчĕк библиотека тумалла.

**Темăри материала сехетсем çине уйăрни.**

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 1. | В. И. Ленин—ĕççынни-сен çулпуçĕ, вĕрентекенĕ. | И. Ивник. Ленин атте. |
| 2. | 2. В. И. Ленин ячĕ—ĕçхалăхшăн хаклă ят. | И. Малкай. Ленин палăкĕ. |
| 3. | Ильичăн ача чухнехи тата шкулта вĕреннĕ чухнехи çулĕсем. | А. Ульянова. Ильичăн ача чухнехи тата шкулта вĕреннĕ чухнехи çулĕсем. |
| 4. | В. И. Ленин тата Коммунистсен партийĕ рабочисемпе хресченсене çĕнĕ пурнăç тума ертсе пыни. | Н. Крупская. Владимир Ильич Ленин. |

11-мĕш тема. «Майăн 1-мĕшĕ» *(3 сехет)*.

Темăри произведенисене вуланипе вĕренекенсем Майăн пĕрремĕшĕ пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн чаплă уявĕ пулни çинчен пĕлеççĕ. Çав уява хальхи вăхăтра мĕнле уявласа ирттернипе паллашаççĕ. Учителĕн ачасене Май уявне ĕлĕк мĕнле уявланине хальхипе танлаштарса пăхма пулăшмалла.

Сивĕ хĕл хыççăн килекен çурхи уява пĕчĕк ачасем çав тери юратаççĕ. Май уявĕ çинчен çырнă сăвăсене пăхмасăр калама вĕренеççĕ. Уяв çинчен çырнă произведенисене интересленсе вулаççĕ. Май уявĕ çинчен ирттерекен уроксем вĕренекенсен ăстăнне, шухăш-кăмăлне малалла аталантарса пымалла, вĕренекенсене интернационалла туслăх тата патриотизмла туйăм çинчен пуçламăш пĕлӳ памалла. Май уявĕ вăхăтĕнче кашни завод, фабрика е предприяти, кашни колхоз е совхоз, кашни шкул хăй тунă çитĕнӳсене пăхса тухнине ăнлантарса памалла.

Ку темăна кĕртнĕ «Çĕнтерӳ кунĕ» тата «Пионерсен уявĕ» статьясене учитель хăйне кирлĕ вăхăтра вулаттарма пултарать.

**Темăри материала сехетсем çине уйăрни.**

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама pană калавсемпе сăвăсем. |
|---|---|---|
| 1. | Май уявĕ çĕршывра. | И. Ивник. Пирĕн май. В. Давыдов-Анатри. Май уявĕ. |
| 2. | Майăн пĕрремĕшĕ Мускавра. | «Май уявĕ Мускавра» статья. |
| 3. | Маевка (Май уявне уявлама пуçлани). | А. Сымокин. Маевка. |

12-мĕш тема. «Çулла» *(6 сехет).*

«Çулла» тема вĕренӳ çулĕнче вуламалли юлашки тема. Вĕренекенсем çуллахи çанталăк çинчен, ӳсентăрансемпе чĕрчунсен пурнăçĕ çинчен, çынсем çутçанталăк пуянлăхне упрасшăн тăрăшни çинчен тата çынсен çуллахи ĕçĕсем çинчен çырнă калавсем вулаççĕ. Çав вăхăтра вĕренӳ çулĕнче текстпа ĕçлессипе тунă ĕçсене аса илсе çирĕплетсе хăвармалла.

Вĕренекенсен вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче такăнмасăр, сăмахсене сыпăксем çине пайламасăр, ăнланса, предложени вĕçĕнче чарăнса тăрса, кирлĕ сасăпа вулама, вуласа тухнă текст тăрăх панă ыйтусем çине ответлеме, текста уйрăм пайсем çине пайлама, вуланă текстăн содержанине харпăр хăй тĕллĕн каласа пама пĕлмелле.

Произведенисене вуланă чухне вĕсен уйрăмлăхĕсем çинче чарăнса тăмалла. Вĕсен шутне сăвăсене (С. Элкер «Çуллахи ир», К. В. Иванов «Çулталăк хушши»), илемлĕ калавсемпе сюжетлă калавсене (К. Ушинский «Тăватă ĕмĕт», П. Иливанов «Утăри каç»; И. Гончаров «Çуллахи каç»; Г. Харлампьев «Кӳлĕ хĕрринче»), юмахсене, ваттисен сăмахĕсене, тупмалли юмахсене вуласси кĕрет.

## Темăри материала сехетсем çине уйăрни.

| Уроксен йĕрки | Урокăн теми. | Вулама панă калавсемпе сăвăсем. |
| --- | --- | --- |
| 1. | Илемлĕ çулла! | «Çулла» статья.<br>С. Элкер. Çуллахи ир. |
| 2. | Вĕçен кайăксен çуллахи пурнăçĕ. | Г. Харлампьев. Кӳлĕ хĕрринче. |
| 3. | Çуллахи каç. | И. Гончаров. Çуллахи каç. |
| 4. | Çулталăк хушши. | К. Ушинский. «Тăвата ĕмĕт».<br>К. Иванов. «Çулталăк хушши». |
| 5. | Колхозниксен çуллахи ĕçĕсем. | «Пахча тăшманĕсем» статья.<br>П. Иливанов. Утăри каç. |
| 6. | Пĕтĕмлетӳ урокĕ. | П. Ялкир. Ирхи зарядка.<br>«Вĕренӳ çулĕ пĕтет» статья. |

Вулав урокĕсене ирттермелли тĕслĕхсем.

**«Çемье» темăпа Г. Ефимовăн «Аннене хăратса ӳкерер мар» калавĕ.**

Ачасене вулама хăнăхтарассине аталантарасси. Ульяновсен туслă çемйипе В. И. Ленин амăшне мĕнле юратни, хисеплени, ăна упрама тăрăшни çинчен вуласа ăнланса, пирĕн çулпуç этемлĕхĕн ырă енĕсемпе пуян пулнине кăтартасси, ачасенче çавăн пек туйăмсем вăратасси.

Урокра кирлĕ хатĕрсем: В. И. Ленин портречĕ, Ульяновсен çемйи сăнӳкерчĕкĕ.

1. Умĕнхи калаçу. В. И. Ленин çинчен калаçу: В. И. Ленин ĕçхалăхĕн çулпуçĕ, аслă вĕрентекенĕ, çывăх тусĕ пулнă (çак предложение портрет айне çырсах хумалла та, урока çав предложение вулаттарса пуçламалла). Вăл ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатма тăрăшнă. Ра-

бочисемпе хресченсен ачисем пурте вĕренччĕр тенĕ. Пирĕн халăх Ленин вĕрентнине асра тытать, вăл кăтартса хăварнисене туса пырать. Эпир коммунизм тăватпăр.

Малалла панă ӳкерчĕк çинчи Ульяновсен çемйине паллаштармалла: И. Н. Ульянов—В. И. Ленин ашшĕ — чăвашсем валли шкулсем уçнă. Амăшĕ, Мария Александровна, питĕ ырă кăмăллă, тĕрĕслĕхе юратакан, ĕçчен хĕрарăм пулнă. Çак çемьери çынсем халăхшăн ĕçлекен çынсем—революционерсем пулнă. Çемьере пĕр-пĕрне юратнă, хисепленĕ.

Урок темипе паллаштарса, «Крым», «операци» сăмахсене ăнлантармалла.

II. Текста пĕрремĕш хут пĕтĕмĕшпе вулани (учитель вулать).

III. Содержани тăрăх кĕске калаçу. Калавра камсен çемйи çинчен каланă? Мария Александровна ăçта кайнă? Килте мĕнле инкек сиксе тухнă? Владимир Ильич Мария Ильинична çинчен амăшне хăçан пĕлтернĕ?

IV. Калава пайсем тăрăх вуласа разбор тăвасси.

1-мĕш пай «Крымри амăшне пĕлтерме тăхтаса тăнă...» предложенипе пĕтет. Икĕ ачана вулаттармалла, вуласа тухсан, ачасем ыйту çине ответлеççĕ, е текстра ыйтăва ответлемелли сăмахсене тупса вулаççĕ, вуланин пĕлтерĕшне ăнланаççĕ.

Мария Александровна канма кайнăшăн ачисем мĕншĕн савăннă? Çав вырăна тупса вулăр.

Мария Ильиничнăна тухтăрсем мĕн тенĕ? Тăванĕсем пăшăрханса ӳкнĕ вырăна тупса вулăр.

Владимир Ильич кам патне хăвăрт çыру çырать? Çырăва тупса вулăр. Çак çырупа мĕн çинчен пĕлетпĕр?

Ульяновсен çемйинче пур ĕçе те пĕр-пĕринпе калаçса, килĕшсе тунă.

«Шикленетĕп» сăмаха тепĕр тĕрлĕ мĕнле калама пулать? (Хăратăп, иккĕленетĕп.)

«Тăхтаса тăмасăр» мĕнле ăнланатăр? (хăвăртрах, халех, чарăнса тăмасăр, васкаса, часрах...)

Владимир Ильичпа Дмитрий Ильич амăшне пĕлтересси пирки мĕнле калаçса татăлнă? Çав вырăна тупса вулаççĕ. Мĕншĕн пĕлтересшĕн пулман?

Вуласа тишкернĕ пая ят пама пулать—«Аннене хăратса ӳкерер мар» е «Аннене лайăхрах упрар». Тăвată сыпăкран тăракан план: 1) Ачисен савăнăçĕ; 2) Килти

инкек; 3) Тăвансен канашлăвĕ е «Васкавлă çыру»; 4) Амăшне хăратассине хирĕç.

2-мĕш пай. Вуласа тухмалла (2 ача).

— Владимир Ильич амăшĕ патне Мария Ильинична çинчен хăçан çырнă? **Çырăва тупса вулăр.** Çак çырури сăмахсенчен мĕн курма пулать? Тепĕр хут малтанхи виçĕ предложение ăшра вуласа тухăр (амăшне хĕрхеннĕ, унăн лăпкăлăхне упранă). 4-мĕш предложение тепре ăшра вулаççĕ—амăшне питĕ юратнă курăнать, юлашки предложение те тепĕр хут ăшра вулаççĕ—амăшне хисепленĕ, унран каçару ыйтать.

Çак çыру амăшĕшĕн мĕнле çыру пулнă? (Питĕ хаклă çыру пулнă.)

**«Вăл ачисен тĕрекĕ, çуначĕ пулнă»** — тенине эсир мĕнле ăнланатăр?

Ку пая мĕнле ят пама пулать? (Хаклă çыру. Хăрушлăх иртсе кайнă. Юлашки предложени пек те аван.)

1-мĕш пай пекех ку пайĕ тăрăх та план тума пулать: 1) хаклă çыру; 2) Мария Александровна—ачисен тĕрекĕ; 3) эпир вĕсем пек пулсан, мĕнле пулĕччĕ-ши!

Калавпа тата тепĕр вариантпа ĕçлемс пулать. Иккĕмĕш хут вуланă чух текста 4 пая уйăрса 4 ачана вулаттармалла, кашни пайне ят парса пымалла.

1. Мария Александровна Крымра капни е килти инкек;

2. Амăшне пăшăрхантарасшăн мар.

3. Хаклă çыру.

4. Пирĕн те çавсем пек пуласчĕ.

V—VI. Кун хыççăн тепĕр хут вуласа тухаççĕ те содержанине калаççĕ, вăхăт çитмесен, килте вуласа тухса, содержани калама хатĕрленеççĕ.

VII. Урокра пĕтĕмĕшле калаçу ирттермелле. Ыйтусем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ.

— Мĕншĕн Владимир Ильичпа тăванĕсем амăшне питĕ юратнă? (Çав вырăна тепĕр хут тупса вулăр.) Кĕнекери сăмахсемпе ответлĕр.

— Амăшĕ вĕсене пурнăç панă-çке, тĕрĕс çул çине тухма вĕрентнĕ. Вăл ачисен тĕрекĕ, вĕсене пулăшаканĕ е тăрăшаканĕ пулнă.

— Эпир ку калава вуласа мĕн-мĕн пĕлтĕмĕр?

Калав пире мĕнле пулма хушать? Çак ыйту çине те текстри предложенисемпе ответлĕччĕр.

Халь хăвăра аннĕрсемпе, çемьери ытти çынсемпе мĕнле тытнине астуса илĕр-ха.

Килте илемлĕ вулама вĕренеççĕ. Урокра содержание калама ĕлкĕреймен пулсан, тепĕр урокра калаççĕ.

## «Юмахсем...» темăран «Виçĕ упа» юмахпа урокра ĕçлесси.

Юмаха 1-мĕш класри ачасем питĕ юратаççĕ. Юмах лайăх вулама вĕрентме, çыхăнуллă калаçу чĕлхине аталантарма пит аван. Урокра темиçе тĕрлĕ вулаттарма пулать. Ачасем рольпе вулама юратаççĕ, вĕсене юмах тăрăх тăвакан инсценировка килĕшет. Юмах план тума вĕрентме, содержание калама çăмăл. Юмахсене текста çывăх, хăйĕн стилĕпе калаттарни усăллăрах. Юмахсем тăрăх сăмахлă ӳкерчĕк тăваççĕ, пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ.

I. Умĕнхи кĕске калаçу.

Ачасем мĕнле тискер кайаксем пĕлеççĕ, ăçта курнă— каласа параççĕ. Упа çинчен мĕн пĕлнине калаççĕ, учитель хушса калать. Упа çинчен мĕнле юмах пĕлнине ыйтать. Картинăсем пăхаççĕ (упа ӳкерчĕкне).

II. Учитель «Виçĕ упа» юмаха вуласа е каласа парать. «Тирек» сăмаха вуланă чухнех тепĕр тĕрлĕ каласа хăварать.—Эсир хăш вырăнта хăрарăр? Мĕншĕн?

III. Содержани тăрăх кĕске калаçу.

— Пĕр хĕрача вăрманта ăçта пырса тухнă? Çак пӳртре миçе пӳлĕм пулнă? Хĕрача хăш тирĕкрен апат çиет? Мишутка хăçан питĕ хытă çухăрса ярать? Хĕрача мĕнле хăтăлать? «Упасем киле тавранаççĕ» картинăна пăхаççĕ. Кашнин ятне калаççĕ.—Упасем каяççĕ е тавранаççĕ? Ăçтан курма пулать?

IV. Пайсем тăрăх вуласа разбор туни.—1-мĕш пай. 1-мĕш абзаца сăмахлă ӳкерчĕк туса калаççĕ.—Упасем мĕнле пулнă? Виçĕ упа çинчен каланă вырăна тупса вулаççĕ. Мĕншĕн упа çурине «пĕчĕкçеç» тенине ачасем каласа кăтартаççĕ.

— Пӳртре мĕншĕн никам та çук? Вуланă пая ят парса хăвараççĕ—«Хĕрача упасен çуртĕнче» (е урăхла).

2-мĕш пай.

«Вăтам тирĕк» тенине ачасем мĕнле ăнланаççĕ?

— Апат çимелли пӳлĕмре хĕрача мĕн-мĕн курнă? Мĕншĕн кашни япали виçĕ тĕрлĕ пулнă-ши? Хĕрача мĕн

тунине йĕркипе каласа тухăр. (Сăмахлă картина тусан та аван).

Ку пая та ят параççĕ—«Апат çимелли пӳлĕмре».

3-меш пай.

Малтан пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ. Унтан иккĕмĕш ӳкерчĕк тăрăх мĕнле хĕрача мĕнле кашăкпа, мĕнле тирĕкрен, мĕнле пукан çине ларса апат çинине каласа параççĕ. Хĕрача ашкăнса пахнă вырăна тупса вулаççĕ, ун пирки хăйсем мĕн шухăшланине калаççĕ.

— Мĕншĕн хĕрачана Мишутка вырăнĕ килĕшнĕ? Çыврмалли пӳлĕме мĕнле ӳкерсе кăтартма пулать? Ку пайăн содержанине пĕр предложенипе калăр.

— Хĕрача апат çирĕ те çывăрма выртрĕ.

— Кашни упин паллине, ятне, япалисем мĕнлине каласа тухăр.

— Михайло Иванович пысăк та çăмламас, унăн пысăк пукан, пысăк тирĕк, пысăк кашак, пысăк кровать... Вăхăт çитсен, ку пайсене тепĕр хут вулаттарсан аван.

Килте вуланă пайсен содержанине калама хатĕрленсе килеççĕ.

Иккĕмĕш урокра IV—V пайсене учитель вуласа парать, мĕншĕн тесен ачасем кирлĕ пек интонаципе анланмалла вулаймаççĕ.

4-мĕш пай. Упасем апат çимелли пӳлĕмре мĕншĕн камăлсăр пулчĕç?

Кашни упин сăмахĕсене тупса вулаççĕ, «мĕкĕрсе», «çухăрса», «йынăшса» сăмахсен пĕлтерĕшне уçмалла.

— Упасем хаярланса пынине ăçтан курма пулать? Çак вăхăтра хĕрача мĕн тăвать? 3-мĕш картинăпа ĕçлеççĕ. Картина çине пăхса содержанине калаççĕ, ăна ят параççĕ.

5-мĕш пай.

— Упасем çывăрмалли пӳлĕме пырсан мĕншĕн çилленсе кайнă? Вĕсем çинчен мĕнле ӳкерчĕксем тума пулать? (Кашни упи хăйĕн кровачĕ патĕнче тăрать...)

Упасем питĕ çилленнине кăтартакан сăмахсене тупса вулаççĕ.

Хĕрача упасене курсан мĕн тунă? (Текстри сăмахпа калаççĕ.)

Мĕншĕн «вăркăннă» тенĕ, тата мĕнле калама пулать? (чупнă...) Вĕсен хушшинче мĕнле уйрăмлăх?

Хĕрача мĕнле хăтăлнă?

Хĕрача маттуррине хăш предложенисенчен курма

пулать? Уйрăмах хăш сăмахсенчен (вăркăннă, тăрст! сикнĕ).

Пая ят параççĕ.

4-мĕш картина тăрăх калаçу ирттереççĕ, ят параççĕ.

V. Пĕтĕмĕшле калаçу.

— Сире юмахра кам килĕшрĕ? Мĕншĕн? Хĕрача çинчен мĕн калама пулать? Мĕнле хĕрача вăл? (ăслă, пĕлме тăрăшакан, маттур, хăюллă хĕрача) хăйне тытма пултарать, çухалса каймасть.) Упасем пирки мĕн каламалли пур? (Пысăк, вăйлă, тискер, хаяр, анчах вĕсен ăсĕ çук, упасем айван.)

Учитель: хĕрача пĕчĕк пулсан та, упасенчен хăй ăслипе, шухăшласа илме пултарнипе вăйлă, тесе çирĕплетсе каласа хăварать. — Çын пур чĕрчунтан та ăспуçпа, шухăшлама пултарнипе вăйлă.

Ку произведени мĕншĕн юмах иккенне калаççĕ.

4—5 пайсене рольпе вулаттармалла, инсценировка тумалла.

Килте пĕтĕмĕшпе вуласа тухса, текста çывăх калама хатĕрленеççĕ, картина ӳкерттерсен те аван.

Диафильм кăтартсан тата та аванрах.

**«Пирĕн çар» темăран «Манăн пичче» сăвăпа ĕçлесси.**

Ачасен вулавне лайăхлатас, çыхăнуллă калаçу чĕлхине аталантарас енĕпе ĕçлемелле.

Ку темăра умĕнхи калаçупа пĕтĕмĕшле калаçу паллă вырăнта тăраççĕ, мĕншĕн тесен ачасене политикăлла ăнлану пама, патриотизмпа интернационализмла воспитани пама, хамăр халăхăн геройла ĕçĕнтерĕвĕпе хавхалантарма учителĕн сăмахĕ витĕмлĕ пулать.

Совет Çарĕ—пирĕн çар, совет халăхĕн лăпкă пурнăçне сыхласа тăни çинчен букварьте статья та вуланă.

Класс умĕнче 1) Совет Çарĕ—пирĕн çар. 2. Февралĕн 23-мĕшĕ—Совет Çарĕн уявĕ. 3) «Сывă пултăр Совет Çарĕ!»—плакат çакмалла е доска çине çырса хумалла.

— Пирĕн çар мĕн ятлă? (1-мĕш предложение вулаççĕ).

Часах мĕнле уяв çитет? (Хорпа 2-мĕш предложение вулаççĕ).

Совет Çарĕ мĕн тăвать?

— Совет Çарĕ пирĕн çĕршыва сыхлать. Çавăнпа эпир

лăпкă, хăрамасăр пурăнатпăр, кашни хамăрăн мирлĕ ĕçе тăватпăр, вылятпăр, кулатпăр, савăнатпăр, акă эсир ăшă, çутă, таса классенче вĕренетĕр. Эпир яланах хамăр çар мĕнле пултăр тетпĕр? (Хорпа 3-мĕш предложение вулаççĕ.)

— Пирĕн çĕршыв мĕн ятлă? Эсир хамăр çĕршыв çинчен мĕн пĕлетĕр? (Совет Союзĕ питĕ пысăк, пуян, хуласем, ялсем, вăрмансем, сăрт-тусем, юханшывсем, уй-хирсем... питĕ нумай.)

Тата мĕн пĕлнине хăйсем калаççĕ. Пирĕн çĕршывра пурте лайăх пурăнаççĕ, ĕçлеççĕ, савăнаççĕ, вĕренеççĕ.

Эпир никампа та вăрçасшăн мар.

Тĕнчере çĕршывсем питĕ нумай. Эсир хăшĕсен ятне пĕлетĕр? (Мĕн пĕлнине калаççĕ).

Нумай çĕршывсенче пирĕн туссем пурăнаççĕ, вĕсем—ĕçлесе пурăнакансем, пирĕн пек пурăнма тăрăшакансем.

Пирĕн тăшмансем те сахал мар, вĕсем—ĕçлемесĕр, халăха çаратса пурăнакансем.

Пĕр çĕршывпа тепĕр çĕршыва уйăрса тăракан йĕре (линие) мĕнле калаççĕ? (чикĕ, граница...)

Тăшмансем пире лайăх пурăннăшăн тарăхаççĕ, çав чикĕ урлă каçса, пире сиен тума тăрăшаççĕ, вăрçăпа та килесшĕн. Апла пулсан çав чикĕсене мĕн тумалла (сыхламалла...).

Пирĕн Совет Çарĕ çĕршыва çав тăшмансенчен сыхлать, вал питĕ вăйлă. («Парад» картина кăтартсан лайăх.)

— Чикке мĕнле сыхлаççĕ? Чикĕре хуралта тăракан салтаксене мĕнле калаççĕ? (Пограничник.) Доска çинче хорпа çав сăмаха вулаççĕ. Камсен салтак службинче тăракансем пур, ăçта вĕсем т. ыт. те (хĕвеланăç, хĕвелтухăç, кăнтăр, çурçĕр кăтартăр).

Урок темипе паллаштарать. Сăвва учитель вуласа парать. Ачасем пĕр хут ăшра вулаççĕ, унтан сасăпа тепĕр хут вулаççĕ. Строфасем тăрăх вуласа, содержанине ăнланаççĕ: ыйтусем çине ответлеççĕ, сăмахсен пĕлтерĕшне уçаççĕ, сăмахлă картина тăваççĕ, ят параççĕ.

а) «Хăюллă, маттур» сăмахсене тепĕр тĕрлĕ мĕнле калама пулать? Пиччĕшĕ ăçти чикке сыхлать? Пиччене сăмахпа ӳкерсе параççĕ. Мĕншĕн хĕвелтухăç (хĕвел тухать—сăмахсенчен пулнă). («Чикĕре» картинăпа ĕçлесен аван).

Тепĕр хут вулаççĕ те пая ят параççĕ.

ă) 2 мĕш строфана вулаççĕ.

Чикĕре тăнă чух çанталăк мĕнле пулма пултарать? «Çил улать», мĕншĕн «вĕрет» темен-ши?

«Çил-тăман ахăрать»—«ахăрать» пĕлтерĕшне калаççĕ. (2—3 сăмахпа хĕвелтухăçĕнчи çанталăка каласа хăвармалла).

«Вичкĕн куçлă вăл ялан»—тепĕр тĕрлĕ мĕнле каламалла.

Ку строфа тăрăх сăмахлă ӳкерчĕк тăваççĕ. (Питĕ вăйлă çил вĕрет, юр çума пуçлать, унтан çил-тăман тухса каять. Куçа уçма та питĕ кансĕр, анчах нимрен хăраман, аллине пăшал (автомат) тытнă пичче куç хупмасăр тăрать, чикĕрен никама та каçарас çук!) Тепĕр хут вулаççĕ, строфана ят параççĕ.

б) 3-мĕш строфана вулаççĕ. Пичче мĕне хураллать? «Тăван çĕре» урăхла мĕнле калама пулать? Малтанхи икĕ йĕркене пĕр сăмахпа калăр (яланах). Ку пай тăрăх мĕçе картина ӳкерме пулать? (4 ӳкерчĕк). Мĕншĕн «пиччеçĕм» тенĕ? Строфана тепĕр хут вулаççĕ, ят параççĕ.

в) 4-мĕш строфана вулаççĕ. Юлашки строфана мĕн-мĕн ӳкерсе кăтартма пулать? Вăл картинăсене питĕ хаклă сăмахпа мĕнле калама пулать? (Тăван çĕршыв!)

Пограничник чикĕре мĕне хураллать?

— Тăван çĕршыва, Совет çĕршывне, манăн юратнă çĕршыва...

Сăвва тепĕр хут пĕтĕмĕшпе вулаççĕ.

Малтан ят парса пыман пулсан, ят параççĕ—сăвă планĕ пулать. План тăрăх сăвă содержанине калаттармасан та юрать. (Учебникри картинăпа усă курса) предложенисем тăваççĕ. Пĕтĕмĕшле калаçу.

Сăвва вуласа мĕн-мĕн пĕлтĕмĕр? Мĕншĕн эпир Совет Çарĕн салтакĕсене, пограничниксене питĕ хисеплетпĕр, юрататпăр? Сирĕн маттур, хăюллă салтак пулас килет. Мĕнле майпа çирĕп сывлăхлă пулмалла-ха?

Совет Çарне «пирĕн çар», «халăх çарĕ» тесе мĕншĕн калатпăр (Совет çĕршывне, пире сыхлать, Совет çарĕнче пирĕн ывăлсем тăраççĕ).

Юлашкинчен сăвва тепĕр хут илемлĕ вуласа параççĕ. Совет чикĕçисене тата йытăсем пулăшни çинчен каласа памалла. Ачасене киле пăхмасăр калама вĕренме

парса ямалла. Вăхăт юлсан малтанхи строфасене класрах илемлĕ вулама, пăхмасăр калама вĕренеççĕ.

Совет Çарĕ статьяна çак урокрах вулаттарма кирлĕ мар, питĕ нумай пулать, ăнланса юлаймаççĕ. Çитменнине вĕсем «Тăван çĕршыв» темăна вĕренмен.

**«Çуркунче» темăна кĕрекен «Тирек» калава вулассипе урока çак йĕркепе ирттермелле.**

Йывăççен пурнăçĕпе вĕсен усси çинчен пĕлӳ парса, йывăççем лартса ӳстерме хавхалантармалла.

Урокра тĕрлĕ йывăççен ӳкерчĕкĕсем кирлĕ. Шыв çине тĕрлĕ вăхăтра лартнă тирек, хăва турачĕсем (пĕрисен папакĕсем палăраççĕ, теприсен пысăкланнă, виççĕмĕшĕсен çулçисем тухнă, тăваттăмĕшĕсен туратран кайнă тымарĕсем те аван курăнаççĕ. Йывăçлă ял (картина).

1. Умĕнхи калаçу. Хамăр таврари, çывăхра ӳсекен йывăççсм çинчен ачасемпе калаçмалла. Йывăççене ушкăнласа тухмалла: садри çимĕç йывăççисем, вăрманти йывăççем, ял, хула урамĕсене илемлетекен йывăççем т. ыт. те. Йывăççем мĕнле пайсенчен тăнине картина тăрăх кăтартмалла (тымарĕ, вулли, турачĕсем... хăшĕ мĕн-мĕн тума кирлĕ...).

2. Шыв çинчи туратсене пăхаççĕ, сăнаççĕ, турат кăчкисем тăртаннине кураççĕ.

— Ку опыт мĕне кăтартать? (Туратран та йывăç ӳстерме пулать, йывăç туратне чĕрĕлме нӳрĕ, ăшă кирлĕ.)

Пĕрремĕш хут учителĕн калава илемлĕ вуламалла та калаври ăнланман сăмахсене ăнлантарса памалла.

Тĕслехрен, тирек. Унтан вĕренекенсене пайăн-пайăн илсе вулаттармалла, тишкерсе тухмалла. Калава пĕлтерĕшлĕ пайсене илсе пайламалла.

Класра ачасене пайăн-пайăн вулаттармалла, 1-мĕш пайĕ «Юлашкинчен çав турат шурă тымарсем кăларма тытăнчĕ»—таран.

Ачан пиччĕшĕ — Кириле мĕн тума туратсем касса килнĕ? Вăл мĕнпе интересленнĕ? Пиччĕшĕ сăмахне тупса вулаççĕ.

— Сире ун сăмахĕ мĕншĕн кăмăла каять? (Вăл шăллĕне те хăй пек сăнав тума вĕрентет.)

Ача шыври туратсем тăрăх мĕн асăрхать? Йĕркипе каласа тухăр. «Тăртанчĕç» сăмаха тата мĕнле калама

пулать? (Паркаланчĕç, пысăкланчĕç...) Мĕнле майпа чĕрĕлсе кайнине кăтартакан вырăна тупса вулаççĕ.— Тымарсем мĕн тума кирлĕ? (Çав вырăна тупса вулаççĕ.) Çак сăнав мĕн кăтартать?

Шкул тавра çитĕнекен тирексене мĕнле лартнă? Тата мĕнле йывăçсем тирек пек хунаççĕ? Йăмрапа хăвана мĕнле майпа хунаттарнине каласа параççĕ.

Текста тепĕр хут пĕтĕмĕшпе вуласа тухаççĕ, кайран пайсене ят параççĕ.

Паян сирĕнпе мĕн çинчен вуласа пĕлтĕмĕр? Çапла вара йывăçсене мĕнле хунаттараççĕ? (Тымарпа, тураттпа, вăрăпа.)

Учитель вĕренекенсен умĕнче тирек туратне алла илет те шыв çинче чылай ларнă хыççăн мĕнле улшăнусем пулнине кăтартса парать. Туратăн хуппи симĕсленнĕ, папакĕсем паркаланнă, çулçă тухма пуçланă. Кунсăр пуçне çулçă тухас умĕн кăчкисем çине сарă çилĕм евĕрлĕ шĕвек витĕннине, вăл алă çумне çыпçăннине те палăртмалла.

Вăл çамрăк çулçа хурт-кăпшанкă çиесрен сыхланакан паха шĕвек. Ун çине хурт пырса ларсанах çыпçăнса ларать те çамрăк çулçа çиме пултараймасть.

Тирек хăйĕн чечен çулçисене çапла сыхласа усрать.

Тиреке хăçан тата мĕнле лартса ӳстермелли çинчен учитель каласа парать.

Вĕренекенсем, çак класри октябрĕноксем, йывăç эрнине тимлĕ хутшăнма кирлине, тирексем, йăмрасем, çăкасем, хурăнсем лартма кирлине учитель каласа ăнлантармалла. Ачасене ĕç урокĕнче шкул пахчине е ял урамне йывăç лартма хутшăнтармалла. Йывăçсене мĕнле кăлармаллине тата лартмаллине кăтартса памалла. Ачасене йывăçсем лартма вĕрентмелле.

Йывăç лартма вăхăт çитмен пулсан, ачасене килте тирек е хăва турачĕсене кĕленчене шыв ярса лартса, сăнав туса пăхма хушмалла.

Йывăç турачĕсене лартнă кунран тытăнса, унпа мĕнле улшăну пулнине çантăлăка сăнаса çырса хумалли дневник çине кашни кун паллă туса пыма хушмалла.

Предметлă урока çак çӳлте кăтартнă майпа ирттерме пулать.

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ УРОКĔСЕНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĂЙĂСЕМ.

### ЧĔРĔ САСПАЛЛИСЕМ.

Ку вăййа сăмахри саспаллисене аса илес тата вĕсене сиктерсе хăварасран асăрхаттарас тĕлĕшпе час-часах иртгермелле. Саспаллисенчен тумалли сăмахсене учителĕн малтан хатĕрлесе хумалла.

Учитель ачасене сăмах тума кирлĕ саспаллисене салатса парать, унтан çав сăмаха ерипен калать. Вĕренекенсем çав саспаллисене илсе тухса, сăмах пулмалла йĕркеленсе тăраççĕ. Çапла вара, класс умĕнче сăмах пулса тăрать. Вăл сăмаха вырăнта ларакан ачасем пĕчченшерĕн тата ушкăнпа та вулаççĕ.

Тĕслĕхрен, «урам» сăмаха тумалла пулсан, вĕренекенсене а, м, у, р саспаллиллĕ карточкăсене салатса памалла, унтан ерипен «урам» сăмаха каламалла. Ачасем малтан учитель каланине итлеççĕ, унтан вăл сăмахра мĕнле сасăсем пуррине тата вĕсен йĕркине асăрхаççĕ. Çакăн хыççăн вĕсем пĕрин хыççăн тепри класс умне йĕркипе тухма тытăнаççĕ. Малтан класс умне у саспаллиллĕ карточка илнĕ ача тухать те, хăйĕн саспаллине çӳлелле çĕклесе кăтартать, унтан иккĕмĕш ача р саспаллине, кайран ытти ачасем хăйсен саспаллийĕсене (а, м) çĕклесе кăтартаççĕ. Çапла вара, класс умĕнче учитель калана «урам» сăмах пулса тăрать.

### ТОЧКА.

Учитель пĕчĕк калав вулать. Пĕрремĕш хут вулана чухне вĕренекенсем кашни предложенин вĕçне асăрхаса юлма тăрăшаççĕ. Иккĕмĕш хут вулана вăхăтра точка лартмалли вырăнта вĕренекенсем алă çупаççĕ.

### ТĔРĔС ПĔЛ.

Учитель сăмах калать. Вăл пысăк саспаллипе пуçласа çырмалли сăмах (çын хушамачĕ, ячĕ, выльăхсен ячĕ, юханшывсен, хуласен, ялсен, урамсен ячĕсем) пулсан, ачасем алă çĕклеççĕ те: «Яланах пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ»,—тесе калаççĕ. Ахаль самах çеç каласан, алă çĕклемеççĕ, шăп лараççĕ.

### КАМ? тата МĔН?

Тĕрлĕ япаласен ячĕсене учитель йĕркипе каласа парать. Кам? ыйтупа ыйтăнакан сăмаха каласан, вĕрене-

кенсем алӑ çĕклеççĕ, мĕн? ыйтури сăмаха илтсен, аллине антараççĕ. Акӑ, тĕслĕхрен, ача, аппа тесе кашни саспаллине васкамасăр калать, ачасем алӑ çĕкленинех лараççĕ, унтан вӑл «лаша», «сĕтел» тет, ачасем аллине антараççĕ, «çын», тет, каллех аллисене çĕклеççĕ.

### МИÇЕ УÇА САСА?

Ку вӑйа чи ансат тĕслĕхсенчен пуçламалла. Учитель пĕр сыпăклӑ сăмах калать. Вĕренекенсем пĕр пӳрне кӑтартаççĕ те уçă сасса калаççĕ. Икĕ сыпăклӑ сăмаха каласан, икĕ пӳрне кӑтартаççĕ те уçă сасăсене калаççĕ, малалла та çаплах. Вӑйа ирттерме малтанах 1, 2, 3, 4, 5 цифрăсем çырнӑ карточкӑсем хатĕрлесен тата та аванрах.

— Шыв,—тет учитель. Вĕренекенсем пĕрре çырнӑ карточкӑна çĕклеççĕ. Учитель палӑртнӑ ача ответлет:

— Ы уçă сассӑ.

— Çыру,—илтĕнет учителĕн сасси. Ачасем иккĕ çырнӑ карточкӑна çĕклеççĕ. Вĕренекенсенчен пĕри вӑл сăмахри уçă сасăсене калать.

— Ы, У,—тет вĕренекен.

Вӑйӑ çак мелпе пулса пырать.

### МĔНЛЕ СЫПАК?

Ку вӑйа ирттерме вĕренекенсем малтанах «çемçе» тесе тата «хытӑ» тесе çырнӑ сăмахсене икĕ карточка хатĕрлеççĕ.

Учитель е вĕренекен сăмаха сыпăксем çине уйăрса ерипен калать. Вĕренекенсем мĕнле сыпăк илтĕннине кура «çемçе» е «хытӑ» тесе çырнӑ карточкӑна кӑтартаççĕ (çемçе сыпăк пулсан «çемçе» сăмаха, хытӑ сыпăк пулсан «хытӑ» сăмаха кӑтартмалла).

### МĔНЛЕ САМАХ?

Вӑйа мĕнле ирттермеллине учитель каласа ӑнлантарать.

— Эпĕ пĕр сăмах шухӑшлатӑп, анчах сире унăн пĕремĕш сыпăкне çеç калатӑп. Çав сăмаха сирĕн тупмалла пулать,—тет учитель. Малтанхи хутĕнче ертсе пыраканĕ хӑйи пулать.

Учитель калӑпӑр, «сухан» сăмах шухӑшланӑ. Вӑл ачасене «су» сыпăка пĕлтерет. Вĕренекенсем «су» сыпăкпа пуçланакан тĕрлĕ сăмахсем тупса калама пултараççĕ: су-пӑнь, су-рӑх, су-хӑр, су-лӑ, су-хан. «Сухан» сă-

маха калакан ачана учитель çапла калать: «Эсĕ ман сăмаха пĕлтĕн». Ытти ачасем те «су» сыпăкпа пуçланакан сăмахсене тĕрĕс тупрĕç. Вăййа халь эсĕ ертсе пыр».

Ертсе пыма кăларнă ача хăй шухăшланă сăмаха шăппăн учителе калать. Учитель çав сăмахăн малтанхи сыпăкне ачасене пĕлтерет. Темиçе хут вылянă хыççăн вĕренекенсем хăйсем тĕллĕнех вăййа малалла тăсма пултараççĕ.

## ПИЛĔК САМАХ.

Ку вăййă ăмăрту майлă пулса иртет. Вĕренекенсен пĕр пек саспаллирен пуçланакан пилĕк япала ячĕ тупса çырмалла. Кам çав пилĕк сăмаха тĕрĕс те илемлĕ çырма ĕлкĕрет, вăл çĕнтерет.

Тĕслĕх: атте, анне, ача, арман, апат.

Пĕр вăхăтрах темиçе ача тĕрĕс çырса пĕтерсен, вĕсем пĕр ача çĕнтериччен малалла ăмăртаççĕ. Ытти вĕренекенсем вĕсен ăмăртăвне хутшăнмаççĕ.

Çак вăййа япала ĕçне, паллине пĕлтерекен сăмахсем çинчен вĕреннĕ вăхăтра та усă курма пулать. Вăл ачасен чĕлхине пуянлатма, сăмахсене тĕрĕс çырма вĕренме пулăшать.

## СЫПАКСЕНЧЕН САМАХСЕМ ТАВАССИ.

Учитель е вĕренекен ача пĕр сăмах сыпăкĕ калать. Ыттисен тепĕр сыпăк хушса сăмах тумалла.

Сăмахран, «пу» сыпăка каланă пулсан, вĕренекенсем лă, сă, ра, кан сыпăксене хушса пулă, пусă, пура, пукан сăмахсене тăваççĕ. Кам ытларах сăмахсем тупать, вăл çĕнтерет. Çĕнтерекенĕ сăмах тумалли çĕнĕ сыпăка калать. Çапла майпа вăйă малалла тăсăлать. Ку вăййа ачасемпе час-часах иртттерни сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарса çырма хăнăхтарса пырать.

## ПРЕДЛОЖЕНИЕ КАЛАСА ПЕТЕРЕР.

Ку вăййа япалана, япала паллине, япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсем çинчен вĕреннĕ чухне иртттермелле.

Учитель предложени калама пуçлать, вĕренекенсен каласа пĕтермелле.

Хĕвел анать те, ... пулать. (Каç).

Автобус çитсе чарăнчĕ те, ... анчĕç (Çынсем).

Таврана пĕлĕт хупласа илчĕ те, ... çума пуçларĕ (Çумăр. Юр).

Çулла ăшă, хĕлле ... (сивĕ).

Тулта сивĕ, пӳртре ... (ăшă).

Чул хытă, мамăк ... (çемçе).
Лаша чупать, кайăк... (вĕçет).
Пулă ишет, шапа... (сикет).
Нăрă чупать, ăман ... (шăвать).

## «ЭПИР ТЕ...»

Ку вăйă ачасене питĕ тимлĕ пулса итлеме вĕрентет. Апла тумасан, часах йăнăшма пулать.

Учитель хăйĕн калавне пуçлать. Вĕренекенсем тимлĕ итлесе ларaççĕ. Учитель калани ачасемшĕн май килет пулсан, «Эпир те» тесе калаççĕ. Майлă мар пулсан, нимĕн те каламаççĕ, шăп лараççĕ.

— Эпĕ вăрмана кайрăм... Кунта «Эпир те» теме пулать-ши? (Пулать). Вăрманта кăмпа пухрăм... «Эпир те» теме юрать-и? (Юрать). Чăрăш айĕнче кăмпасем ӳсеççĕ... «Эпир те» теме юрать-и? Хăшпĕр ачасем «юрать» тесе калама пултараççĕ, теприсем кулаççĕ. Учителĕн ăнлантарса памалла.

— Апла калама юрамасть, мĕншĕн тесен эпир чăрăш айĕнче ӳсместпĕр.

## ÇАМ МĔНЛЕ КУÇАТЬ?

Ку вăййа япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсене вĕреннĕ вăхăтра иртермелле. Вăйă вĕренекенсене тимлĕ пулма хушать, мĕншĕн тесен вăйă хăвăрт пулса пырать. Учителĕн вăййа иртерме уйрăммăн хатĕрленме кирлĕ мар.

Учитель малтан чĕрчунсем вырăнтан вырăна мĕнле куçни çинчен калаçу иртерет: вĕçет, ишет, чупать, шавать, тата ытти те. Унтан, калăпăр, вĕçет сăмаха илсе, вăйă мĕнле иртессине ăнлантарать.

— Эпĕ сире тĕрлĕ сăмахсем калăп. Асăннă япала вĕçме пултарать пулсан, сирĕн сылтăм алăна çĕклемелле те «вĕçет» тесе каламалла. Япала вĕçме пултараймасть пулсан, алă ан çĕклĕр, шăп ларăр. Вăййа пуçлăпăр.

Шанкăрч... (вĕçет). Чĕкеç... (вĕçет). Самолет... (вĕçет). Йытă...

Чылай ачасем асăрхаса пыман пирки, аллисене çĕклеççĕ те «вĕçет» тесе хураççĕ.

— Çапла, йытă вĕçме пуçларĕ, тен, тимлĕ пулмасан малалла ĕне те вĕçме тытăнать,—тăрахласа асăрхаттарать учитель.

— Тăри...—малалла тăсăлать вăйă,—вертолет, сывлăш шарĕ... кушак...

Темле асăрхаттарсан та, хăшпĕр ачасем йăнăшаççĕ. Тимлĕ пулма вĕрентес тĕллевпе вĕсене вăйăран вăхăтлăха кăларма пулать.

## ХЫТА САМАХСЕМ, ÇЕМÇЕ САМАХСЕМ ТАТА ХУТАШ САМАХСЕМ.

Чи малтанах вĕренекенсене килте «çемçе», «хытă» тата «хутăш» сăмахсене çырнă карточкăсем хатĕрлеме хушмалла. Ку ĕçе вĕсем аслăрах классенче вĕренекенсем пулăшнипе тума пултараççĕ. Учитель кăтартнă тĕслĕхсене пăхса, пĕрремĕш класра вĕренекенсем те ку сăмахсене тĕрлĕ сăрлă кăранташсемпе çырса хатĕрлеме пултараççĕ. Тĕслĕхрен, «çемçе» сăмаха хĕрлĕ сăрлă кăранташпа, «хытă» сăмаха кăвак сарлă кăранташпа, «хутăш» сăмаха симĕс сăрлă кăранташпа çырса хатĕрлеме пулать.

Урокра, вăйă иртгернĕ вăхăтра, учитель каланă сăмах мĕнлине кура вĕренекенсем хатĕрленĕ карточкăна çĕклесе кăтартаççĕ. Асăрханă йăнăшсене çийĕнчех тӳрлетеççĕ. Çирĕпех ăнланайман вĕренекенсене тепĕр хут ăнлантарса пама тивет.

## ÇЫН ЯЧĔСЕМ.

Пĕрремĕш сăмахне учитель калать. Калăпăр, Гена ята каланă пултăр, вĕренекенсем, сăмахсен вĕçĕнчи сасăсене асăрхаса, çав сасăсемпе пуçланакан çын ячĕсене каламалла. Гена «а» сасăпа пĕтет. Пĕр вĕренекен çав сасăпа пуçланакан сăмаха калать. Вăл «Анюк» сăмаха тупса каларĕ пулсан, тепĕр вĕренекенĕн «к» сасăпа пуçланакан сăмах тупмалла. Малалла та çавăн пекех. Сăмах тупса калакан тепĕр ача каличчен ура çинче тăрать. Никам та урăх сăмах тупса калаймасан, юлашкинчен калакан ача çĕнтернĕ шутланать.

Ку вăййа урăх майлă та ирттерме пулать. Вылякансен сăмахсене хăйсен черечĕ çитсен тупса каламалла пулать. Шухăшлама кашнинех пĕр пек вăхăт памалла (калăпăр, 10 таран шутличчен). Калама черет çитнĕ ача йышăннă вăхăтра çын ятне тупса калаймасан, вăйăран тухса ӳкет. Вăйă пĕр ача юличчен пырать, юлаканĕ çĕнтерет.

СЕРГЕЙ ПАВЛОВИЧ ЮШКОВ
ВАСИЛИЙ ЕФИМОВИЧ ЕФИМОВ
АННА МИХАЙЛОВНА СИДОРОВА

**МЕТОДИЧЕСКИЕ УКАЗАНИЯ
ПО РАБОТЕ С КНИГОЙ
«РОДНАЯ РЕЧЬ» В I КЛАССЕ**

Редактор **К. С. Дмитриева**
Художественный редактор **М. А. Ильин**
Технический редактор **Т. Н. Сергеева**
Корректор **Л. А. Иванова**

Сдано в набор 14/V-1970 г. Подписано к печати 13/VIII-1970 г. Изд. № 171/70 г. Формат $84 \times 108^1/_{32}$. Типогр. № 3. Физич. 2 печ. л. Усл. 3,36 печ. л. Учетно-изд. 3,05 л. Заказ № 2940. Тираж 2000 экз. Цена 8 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, пр. Ленина, 4
Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Володарского, 5.

**6—5**
**171—70М**

Цена 8 коп.

64